чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТ КУН
2014, пуш /март/
29

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

56-57 /26462-26463/ № № | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

*«Чĕнтĕрлĕ чаршав»*

## Савăнăç парнелекен асамçăсем



• *Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕнче «Хĕрарăма сăнарланă чи лайăх роль» номинацире «Мунча кунĕ» спектаклĕнче Кĕтерука вылякан Раççей халăх артистки Нина Яковлева.*

***Пуш уйăхĕн 27-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери театр кунĕ. Театр пĕлтерĕшĕ пирки нумай çырнă, калаçнă, анчах асамлă çав вăй нихăçан та çынна тĕлĕнтерме чарăнмасть. Пĕлетпĕр: сцена çинче пулса иртекен ĕçе артистсем выляса, сăнарласа кăтартаççĕ. Апла пулин те эпир вăл е ку самантра куççуль кăларма та, сасăпа кулма та пултаратпăр.***

Çак куна республикăри профессионал ултă театрта ĕçлекен 600 çын /артистсем, режиссерсем, художниксем, костюмерсем тата ыттисем/ тата куравçăсем уявларĕç, «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурс çĕнтерӳçисене чысларĕç. Палăртса хăварар: асăннă мероприяти 15-мĕш хут иртрĕ. Хăйне евĕрлĕ пĕчĕк юбилей. Уява Чăваш патшалăх пукане театрĕнче паллă турĕç. Курав залне иртнĕ çул вĕçĕнче юсаса пĕтернĕ хыççăн ирттернĕ пысăк мероприяти пулчĕ çакă.

ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, ЧР Театр ĕçченĕсен союзĕн председателĕ Геннадий Медведев уяв ячĕпе саламланă хыççăн «Чĕнтĕрлĕ чаршав» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисемпе паллаштарма пуçларĕç. Лауреатсене кăçал та çичĕ номинаципе хакларĕç.

«Спектакльти чи лайăх музыка» номинацире Пукане театрĕнче лартнă «Я вас люблю, Ромашка» юмаха илемлетнĕ Андрей Галкин композитор çĕнтерчĕ. «Чи лайăх сценографи» номинацире Оперăпа балет театрĕнчи «Отелло» оперăн ӳнерçи Валентин Федоров палăрчĕ. «Эпизодри чи лайăх роль» ята кăçал никама та парас темерĕç. «Арçынна сăнарланă чи лайăх роль» ятшăн тупăшакансен хушшинче халăх юратакан артистсем пулчĕç. Хальхинче Иван Снигирев /Оперăпа балет театрĕ, «Отелло» спектаклĕнти Отелло/ çĕнтерчĕ.

«Хĕрарăма сăнарланă чи лайăх роль» номинацире Раççей халăх артисткине Нина Яковлевăна /Чăваш академи драма театрĕнчи «Мунча кунĕ» спектаклĕнти Кĕтерук, пьеса авторĕ – Арсений Тарасов/ çитекенни пулмарĕ. Нина Михайловна преми укçине ЧР Театр ĕçченĕсен союзне, вата артистсене пулăшма, пачĕ. Маларах та çапла тунăччĕ халăх килĕштерекен актриса.

«Ачасем валли лартнă чи лайăх спектакль» номинацие икĕ ĕç – Пукане театрĕ кăларнă «Я вас люблю, Ромашка» /режиссерĕ Юрий Филиппов/ тата Çамрăксен театрĕ ЧР Пуçлăхĕн гранчĕпе лартнă «Чĕрĕ сăмах» ревю /режиссерĕ Иосиф Дмитриев/ – пайларĕç.

«Çулталăкри чи лайăх спектакль» /режиссура/ ята тивĕçессишĕн кашни театр режиссерĕ ĕмĕтленчĕ пулĕ. Жюри членĕсен шухăшĕпе – хальхинче «Мунча кунĕ» ĕç чи лайăххи. Ăна СССР халăх артисчĕ Валерий Яковлев /Чăваш академи драма театрĕ/ лартнă.

Тĕп номинацисемсĕр пуçне ятарлă Дипломсемпе премисем те пулчĕç. Сăмахран, жюрин ятарлă Дипломне Юрий Волков /Оперăпа балет театрĕнчи «Отелло» оперăри Кассио партийĕшĕн/ тивĕçрĕ. ЧР Театр ĕçченĕсен союзĕн ятарлă парнине Петр Клементьев /Пукане театрĕнчи «Я вас люблю, Ромашка» спектаклĕнти Чĕрĕп сăнарĕшĕн/, çавăн пекех асăннă союзăн Дипломне Евгений Урдюков /Чăваш академи драма театрĕнчи «Мунча кунĕ» спектаклĕнти Мисаил ролĕшĕн/, Сергей Никитин /Çамрăксен театрĕнчи «Чĕрĕ сăмах» спектаклĕнти поэтсен сăнарĕсене калăпланăшăн/, Татьяна Прытченкова /Оперăпа балет театрĕнчи «Отелло» оперăри Дездемона партийĕшĕн/ илчĕç. Вырăс драма театрĕнчи Лариса Былинкина /«Фальшивая монета» спектаклĕнти Полина сăнарĕшĕн/ Мускава пултарулăх командировкине кайма тивĕçрĕ.

**Надежда СМИРНОВА**

## Тӳрĕ калаçу ыйтăвĕ: «Почта тата çыхăну»

Почта ĕçĕ сире тивĕçтерет-и? Хаçат-журнал хакĕсем мĕншĕн ӳсеççĕ? «Хыпар» хаçатпа унăн ытти кăларăмĕ сирĕн килĕре вăхăтра çитет-и? Почтальон ят-сумĕ мĕншĕн чакать? Çак тата ытти ыйтăва, хисеплĕ вулаканăмăрсем, **2014 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче, кĕçнерни кун, 10 сехетре, «Хыпар» хаçат редакцийĕнче Раççей Почтин Чăваш Енри управленийĕн директорĕ Владимир Георгиевич Тимофеев хуравлать.**

Сирĕн ыйтăвăрсене çак адреспа кĕтетпĕр: 428019, Шупашкар, И.Яковлев пр., 13, III хут, «Хыпар» Издательство çурчĕ. Телефонпа çак номерсемпе ыйту пама пултаратăр: /8352/ 56-00-67, 56-33-64, 56-04-17, 62-08-62, e-mail: hypar1@mail.ru

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ «Издательский дом «Хыпар» предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13, для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

## Вăхăтра çырăнăр – «Хыпарлă» пулăр!







*«Хыпарпа» «Хыпар-шăмат куна» «Чăваш пичетпе» «Советская Чувашия» киоскĕсенче /279 тенкĕ/, çавăн пекех редакцире альтернатива мелĕпе /144 тенкĕ/ çырăнтараççĕ*

*Сывлăх сыхлавĕ*

# Тухтăрсене тĕллевлĕн вĕрентĕç

***"Республикăри сывлăх сыхлавне хакламашкăн демографин икĕ кăтартăвне тĕпе хумалла. Пĕрремĕшĕ – ача çураласси, тепри – çынсем пурнăçран уйрăлни, – палăртрĕ Алла Самойлова министр журналистсем валли йĕркеленĕ пресс-конференцие уçнă май. – Çут тĕнчене çĕнĕ кайăк килни – ырă пулăм, ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкне кун-çул парнелеме тĕв туни социаллă кăтарту шутланать, мĕншĕн тесен çакă малашлăх тăнăçлăхĕпе тачă çыхăннă. Çураласлăх енĕпе Чăваш Ен пĕлтĕр федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен хушшинче мала тухнă, тин çуралнисем пурнăçран уйрăлнин кăтартăвĕсемпе /вĕсем чакса пыраççĕ/ Раççейре иккĕмĕш вырăн /Санкт-Петербург хыççăн/ йышăннă.***



Вилеслĕх вара – медицинăпа çыхăннă хаклав. 2013 çулта чĕрепе юн тымарĕсен чирне, усал шыççа, туберкулеза пула автансăр яла куçакан сахалланнă. Чăн та çул-йĕр çинчи инкекре вилекенсем нумайланнă. Çакăншăн медицина айăплă тесе çирĕплетеймĕн: васкавлă пулăшупа çийĕнчех тивĕçтерсен те йывăр суранланнисене çăлса хăварма май килменни те пулать.

Алла Самойлова уйрăммăн палăртрĕ: тин çуралнисем тата чĕрепе юн тымарĕсен амакĕнчен вилессине чакармашкăн медицина учрежденийĕсене централизацилени витĕм кӳнĕ. Кун пек чухне пациентсем ятарлă клиникăсенче пысăк технологиллĕ пулăшăва тивĕçеççĕ, вĕсене ăста специалистсем хальхи йышши оборудованипе усă курса сиплеççĕ. Унашкаллине вырăнти сыватмăшра вырнаçтарни пайтасăр: пысăк квалификациллĕ кадрсемпе кашнинех тивĕçтереймĕн, унсăр пуçне пациентсем те вырăнта шутлă кăна.

ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ çирĕплетнĕ тăрăх – Чăваш Ен халăхĕ сывлав органĕсен амакĕпе ытларах нушаланать. Çакă пирус туртнипе, вакцинаци тутарманнипе, чирлесен тухтăр патне каймасăр пĕли-пĕлми сипленнипе, кĕскен каласан хăйсен сывлăхне хакламаннипе çыхăннă. Ӳпкен усал шыççине те асăннă амаксен йышне кĕртмелле. Ăна пуçламăш тапхăрта диагностикăлама кăткăс. Чылайăшĕ бронхоскопи тутармашкăн килĕшмест, ку процедурăна чăтса ирттермешкĕн тӳсĕмлĕх кирлĕ иккен.

Çынсен сывлăхне унчченхи вăхăтри евĕр диспансеризацилеме тытăнни те – иртнĕ çулхи ырă пулăм. Пĕтĕмлетӳ тăрăх халăхăн 20 процентĕ кăна сывă та таса.

Çивĕч ыйтусенчен тепри – пуçламăш сыпăкри тухтăрсем, ансăр специалистсем патне лекмешкĕн кансĕрри. Çакна министр пациентсен ăнланулăх шайĕ пĕчĕккипе сăлтавлать: хăшĕ-пĕри йышăнăва пымашкăн ерçӳллĕ самант тупаймасран шикленсе темиçе хут çырăнать, черете "ӳстерет". Ансăр специалистсем патĕнче тĕрĕсленес текенсене ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин ертӳçи участок тухтăрĕпе канашлама сĕнет. Врач кирлĕ тесе шухăшлать тăк хирург, эндокринолог е ытти специалист патне каймашкăн хăех хут çырса парать. Паллах, вăраха кайнă амакпа учетра тăракан пациентсемсĕр пуçне ĕнтĕ. Тĕрĕссипе унашкал врачсем сиплев учрежденийĕсенче хальлĕхе çитмеççĕ. Çавна май консультаци тата диагностика центрĕсем уçни вырăнлă пулмалла.

Сывлăх сыхлавне аталантармашкăн патшалăх укçа-тенкĕ чылай уйăрать. Тĕслĕхрен, кăçал республикăра унăн консолидациллĕ тăкакĕсен пĕтĕмĕшле виçи ӳсмелле. Патшалăх гарантийĕн программи тăрăх пĕлтĕр 10648 млн тенкĕ уйăрнă тăк 2014 çулта – 11954 млн.

Министр шалу ыйтăвĕ çинче те чарăнса тăчĕ. "Медицина ĕçченĕсене тӳлесси пĕлтĕр 12-20 процент пысăкланнă: тухтăрсен вăл – 28 пин, вăтам персоналăн 16 пин тенке çитнĕ, кĕçĕн персоналăн икĕ хута яхăн хушăнса 10 пинпе танлашнă. Кăçал татах ӳстерме палăртаççĕ.

Пациентсем медицинăн пахалăхлă пулăшăвне кĕтеççĕ. Хăшĕ-пĕрне тивĕçме кансĕрри вĕсене пăшăрхантарать. Кун пек чухне тĕллевлĕх пирки аса илтерни вырăнлă пулмалла. Юлашки çулсенче магнитпа резонанс томографийĕн /МРТ/ тĕрĕслевĕ пирки ырăпа асăнаççĕ. Анчах пуриншĕн те усăллă-и вăл – çакăн пирки ытларах шухăшламалла. Усал шыçăна тупса палăртнине илес тĕк асăннă аппаратура унăн юлашки тапхăрĕнчи улшăнăва – пысăкланнă шыçăна тата метастазăна – кăна уçăмлатать. Онкологи чирĕсене диагностикăлама эндоскопи мелĕсем – бронхоскопи, гастроскопи, колоноскопи – вырăнлă. Вĕсен пулăшăвĕ тӳлевсĕррипе тата тĕрĕслевĕ канăççăрлантарнипе пациентсене ку меслетсем илĕртсех каймаççĕ. Çапах та кун пек чухне сиплекен тухтăр сăмахне ăша хывни вырăнлă.

Алла Самойлова сусăр ачасене, ветерансене малашне те пахалăхлă сиплевпе тивĕçтересси пирки пĕлтерчĕ. Инсультран, йывăр суранран, усал шыçăран хальхи çĕнĕ йышши мелсемпе сипленипе уралanaкансен йышĕ ӳсрĕ. Вĕсене реабилитацилесе обществăна тавăрассине хакланине, çавăн пекех шанчăксăр чирлисем валли полеатив койкисен тытăмне анлăлатассине пĕлтерчĕ министр.

Пичет кăларăмĕсен ĕçченĕсене канăççăрлантаракан ыйту сахал мар пулчĕ: ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви çынсемпе тытакан икĕ енлĕ çыхăнуран пуçласа ачасене сиплемелли тӳлевсĕр эмел, "Земство тухтăрĕ" программа таранах. Кашнинех туллин хуравларĕ министр.

Сăмах май, çӳлерех асăннă программа кăçал та вăйне çухатман. Унпа килĕшӳллĕн ялти сыватмăшсене 61 çамрăк специалист каймалла.

Тепĕр çĕнĕлĕх: аслă шкул пĕтернĕ врачсене совет саманин çулĕсенчи евĕр çирĕплетнĕ йĕркепе сиплев учрежденисене вырнаçтармĕç – 2014 çултан тытăнса пулас специалистсене вĕренмешкĕн тĕллевлĕн йышăнĕç. Пĕлӳ илме янă организаци укçапа тивĕçтерсе тăрĕ, диплом илсен хăй патне йыхравлĕ. Çамрăк специалист унта кайма килĕшмест тĕк пĕтĕм суммăна тавăрса пама тата штраф тӳлеме тивĕ.

■ **Валентина СМИРНОВА**

# Телекомпани çĕнелсе улшăнĕ

***Чăваш Ене «Пĕтĕм Раççейри телекурав тата радиохыпарлав компанийĕ» ФПУП генеральнăй директорĕн çумĕ – регион департаменчĕн ертӳçи Рифат Сабитов килнĕ. Унпа республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тĕл пулнă.***

Рифат Сабитов каланă тăрăх – медиахолдинг цифра хыпарлавĕ çине куçнă май килес çул техникăна улăштарса çĕнетме, çав шутра регионсенче те, палăртать. Компани çак ĕçе 110 млн тенкĕне яхăн хывма шухăшлать. Юлашки хут кун евĕр улшăну 40 çул каялла, 80-мĕш çулхи Олимпиада умĕн, пулнă. Компанин мĕн пур каналĕ пĕрремĕш мультиплекса кĕнĕ. Çитес вăхăтра республика çыннисем «Чăваш Ен» ПТРК эфира кăларакан цифра пахалăхĕллĕ ĕçĕсене курма пултарĕç.

Михаил Игнатьев цифра телекуравĕн пахалăхне хальхи вăхăтра Шупашкар тата Канаш хулисенче, Тăвай ялĕнче пурăнакансем хаклама пултарнине пĕлтернĕ. Ку тăрăхсенче цифра эфирĕ 2013 çул вĕçĕнче сăнав шайĕнче ĕçлеме пуçланă. 2015 çул вĕçнелле ăна Чăваш Ен çыннисен 99 процентĕ курма пултарĕ. «Халăха пахалăхпа тивĕçтермелле. Çынсем çĕнĕ хыпарсене пĕлесшĕн, экономикăри, политикăри лару-тăрупа, общество организацийĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашасшăн, тепĕр чухне ентешĕсен çитĕнĕвĕсене курса савăнасшăн», – тенĕ республика Пуçлăхĕ.

Тĕл пулура наци хыпарлавĕн ыйтăвĕсене те пăхса тухнă. Рифат Сабитов компани çак юхăма республикăра çеç мар, çĕр-шывра та сарма тăрăшнине палăртрĕ. Çулсерен компани Раççей шайĕнче наци темине халалланă фестиваль йĕркелет. Тĕслĕхрен, «Еврази сасси». Кăçал ăна Хакассире ирттерме йышăннă. Михаил Игнатьев республика проекта хутшăнма, Чăваш çĕрĕнче хăнасене кĕтсе илме хатĕррине пĕлтернĕ.

Рифат Сабитов ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Чăваш Ен» ПТРК директорне Екатерина Канюкăна çирĕплетессине пĕлтернĕ. Елена Ижендеева ултă çул ертсе пынă хушăра «компани лайăх енне чылай улшăннине» палăртнă. «Филиал Раççей шайĕнче хăйне кăтартма пултарчĕ. Компание хисеплеççĕ, курăмлă ĕçлет», – тенĕ «Пĕтĕм Раççейри телекурав тата радиохыпарлав компанийĕ» ФПУП генеральнăй директорĕн çумĕ – регион департаменчĕн ертӳçи.

Михаил Игнатьев компани ертӳлĕхне пĕрле хутшăнса тухăçлă ĕçленĕшĕн, регионсен ыйтăвĕсене тивĕçтернĕшĕн, информацие тĕрĕс тата хăвăрт çитерме пултарнăшăн тав тунă.

■ **О.ПЕТРОВА**

# "Шурă чечек" – тасалăх палли

***1882 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче Берлинта Роберт Кох тухтăр хăрушă амакăн бациллине уçни пирки пĕлтернĕ. Сенсациллĕ доклада тунăранпа 100 çул иртнĕ май çак датăна пĕтĕм тĕнчери туберкулезпа кĕрешмелли кун тесе палăртмашкăн йышăннă. Унăн эмблеми – шурă чечек, ӳпке тасалăхĕн палли.***



*● Туберкулез сиенĕ пирки вăхăтра пĕлни инкекрен сыхланма пулăшнине хулари 1-мĕш клиника больницине çӳрекенсем аван ăнланаççĕ.*

"Шурă чечек" уйăхлăх мероприятийĕсемпе килĕшӳллĕн халăх сывлăхне упрас тата туберкулеза профилактикăлас тĕллевпе хулари 1-мĕш клиника больницинче курăмлă чылай ĕçе пуçăннă: куçса çӳрекен установка пулăшнипе Хĕвел тухăç поселокĕнче пурăнакансен флюорографи тĕрĕслевне ирттереççĕ, 1 тата 2-мĕш поликлиникăсенче "Уçă алăксен кунĕсем" вăхăтĕнче çынсене йышăнаççĕ, вĕренӳ учрежденийĕсенче чир сиенĕ çинчен лекци йĕркелеççĕ. Участок терапевчĕсемпе пĕтĕмĕшле практика офисĕн врачĕсем амак /аталану мелĕ, пĕр çынран теприне куçни, профилактика тата сиплев/ пирки листовкăсемпе информаци хучĕсем сараççĕ.

■ **Оксана ИЛЬИНА**

## Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем 2014 çулхи ака уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе ЙЫШĂНМАЛЛИ КУНСЕМ

**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/**

| | |
|---|---|
| **7 О.И.Марков** | Чăваш Республикин строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ |
| **14 В.П.Димитриев** | Чăваш Республикин Хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсене тата ытти техникăна техника тĕлĕшĕнчен асăрхаса тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ – Чăваш Республикин патшалăх тĕп инженер-инспекторĕ |
| **21 С.В.Павлов** | Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ |
| **28 В.И.Петров** | Чăваш Республикин Граждан оборони тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ |

Хăйсен компетенцине кĕрекен ыйтусемпе ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем граждансене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн халăха йышăнмалли пӳлĕмĕнче 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Республика тӳремĕ, 2-мĕш çурт, 105-мĕш пӳлĕм.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 62-34-53, 39-36-43.

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 42-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн полиграфи тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи "Чăваш Ен" издательство-полиграфи комплексĕ" акционерсен уçă обществин форма цехĕн пуçлăхне **Светлана Николаевна ФЕДОРОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă;

халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи "Чувашия-Мед" страхлакан компани" акционерсен уçă обществин страхлакан уйрăмĕн Элĕкри представительствин ертсе пыракан специалистне **Владимир Данилович ГЕРАСИМОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХ ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕССИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă;

транспорт тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн автобази" бюджет учрежденийĕн водительне **Валерий Витальевич АРТЕМЬЕВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТРАНСПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

Çур аки-2014

# Вăхăт çĕр ĕçченне васкатать

Йĕпреç тăрăхĕнчи «Патман» ял хуçалăх кооперативĕн ĕçченĕсем пĕлтĕр уй-хире пуринчен малтан тухса акана ăнăçлă вĕçленĕччĕ. Кăçал та çав ĕмĕт-тĕллевпех хавхаланаççĕ. «Ир вăраннă кайăк пирки ваттисем каланă çунатлă сăмахсене асрах тытатпăр, – тет Çĕнĕ Выçлипе Хумри Ишек ялĕсене пĕрлештерекен хуçалăх ертÿçи Владимир Никифоров. – Машина-трактор паркĕнчи мĕн пур агрегата хĕл кунĕсенчех юсавлисен ретне лартрăмăр. Юсавçăсен звенине механизаторсем те пысăк пулăшу пачĕç. Çак кунсенче районти ятарлă комисси çур акине хутшăнакан техникăна тĕрĕслесе хаклĕ, тыр-пул ăстисене хире тухма ирĕк панă хыççăн правлени юсавçăсене хушма тÿлевпе хавхалантарĕ. Çак тĕллевпе 3 преми турăмăр».

Владимир Куприянович каланă тăрăх – кунти техника паркĕнче ĕçлекенсем юрăхсăра тухнă уйрăм пайсене вырăнтах «иккĕмĕш пурнăç» пама ăста иккен. Юлашки 2-3 çулта кăна ялти ăстаçăсем çапла майпа тахçанах шутран кăларнă техника хатĕрĕсене 10 единица ытла «сиплеврен» кăларнă. Ку ĕçсене тумашкăн укçатенкĕ тăкакламанпа пĕрех, çав хушăрах машинăсемпе кăкарса ĕçлемелли агрегатсен ĕç тухăçлăхĕ вара малтанхи шайринчен палăрмаллах ÿснĕ. «Хăвăрах куратăр, пирĕн ăшă юсав мастерскойĕ те, тивĕçлĕ оборудовани-хатĕр те çук. Хальлĕхе вĕсем пирки ĕмĕтленетпĕр кăна. Коллективра пурте тенĕ пекех пĕр кăмăлтĕллевпе ĕçлеççĕ, рационализатор туртăмне мала хуракан йышлă, – савăк туйăмпа пĕлтерет кооперативăн тĕп инженерĕ Николай Муродин. – Тин кăна заводран тухнă çĕнĕ техника та хăш-пĕр чухне чăхăмлать. Çакна хам та асăрханă. Ку тĕслĕх çын ыйтăвĕ тĕп вырăнта тăмалли, чи малтан пахалăхшăн çине тăрса тимлемелли çинчен каламасть-и вара?»

Пытармăпăр, нухрат енчен «Патманăн» та лару-тăру çăмăл мар, анчах вăл кăткăслăхсемпе йывăрлăхсенчен хăтăлма çĕнĕ мел шырани сисĕнет. Майĕпен пулсан та – техника паркĕ çĕнелсе пыни куç умĕнчех. Юлашки 2 çулта «Енисей» тĕш тырă комбайнĕ, çĕнĕ «Беларусь», хальхи йышши сеялка туяннă. Владимир Никифоров ертÿçĕ хаксен тан марлăхĕпе кăмăлсăр пулнине палăртмасăр чăтаймарĕ: «Пирĕн отраслĕн кашниех çакна лайăх пĕлсе-курса тăрать: ял хуçалăхĕ валли кăларакан çĕнĕ техника пуриншĕн те «шăл çемми» мар. Ытла та «çыртать» унăн хакĕ. Çитменнине, вăл йÿçекен çĕпре пекех хăпарса пырать. Паллах, кунашкал лару-тăрура тыр пул туса илекенсемпе вырăх-чĕрлĕх пăхакансене ĕç укçи ÿстерсе тÿлесси пирки калаçу пуçлани те кăлăхах. Тен, эпир кирлĕ пек ĕçлесе пыма, çукран пур тума вăй-хал, ăсталăх çитерейместпĕр?.. Хамăртан чылай ăнăçлăрах тăрăшакан хуçалăхсене тивĕçлипех ăмсанатăп мар-и? Çав хушăрах шухăша путатăп: «Вĕсем пек ĕçлеме мĕн чăрмантарать пире?»

Кооператив ертÿçи нумаях пулмасть Вăрнар районĕнчи Карл Маркс ячĕллĕ хуçалăхра пулнă, кунта хăйĕн ĕçтешĕпе Валерий Шумиловпа тĕл пулса калаçнă. «Çавалкас Мăратсем кăçалхи çур акине ирттерме 180 тонна минерал удобренийĕ илни çинчен пĕлсен, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм, – калаçăвне малалла тăсрĕ Владимир Куприянович. – Ăçтан çакăн чухлĕ кĕмĕл тупнă-ха? Çунтармалли-сĕрмелли япаласем те ытлăн-çитлĕн кÿрсе килнĕ, машина-трактор паркне те çĕнĕ техникăпа пуянлатнă. Пире, тем тесессĕн те, вĕсемпе танлашма хальлĕхе йывăртарах».

Çĕнĕ Выçлисем Çавалкас Мăратсенчен 9,5 тонна элита вăрлăх туяннă. «Патман» кăçал пусă çаврăнăшне пысăк тухăç паракан сортсем кĕртет. Кунсăр пуçне 10 гектар çинче тутлăхлă япаласемпе пуян качака куракĕ çитĕнтерес тĕллевлĕ. Клеверăн çĕнĕ сортне те вырăн парасшăн.

Кооператив çурхи тата пăрçа йышши культурăсен вăрлăхĕсене хывмалли плана ирттерсе тултарнă. Çуртри валли 345 гектар уйăрнă. Кĕр тыррисем 268 гектар йышăнаççĕ. Калчасем юр айĕнчен сиенленмесĕр тухас шанчăк пур.

Пĕтĕмĕшле илсен – кунти тыр-пул ăстисем çур акине пуçлама хатĕр. Паянхи кун тĕлне 15 тонна топливо, 3 тонна бензин /машинăсем газпа çÿреççĕ/, 40 тонна минерал удобренийĕ туртарса килнĕ. Çак йĕрксен авторĕ унта пулнă кун Киров облаçĕнчи Кирово-Чепецкри хими завочĕн транспортникĕсем кооператив складне тата 20 тонна аммиак селитри пушатса хăварчĕç.

«Районти чылай хуçалăхра 2014 çулхи çур акине тухма пур енлĕн хатĕрленсе çитнĕ. «Патман» хыççăн «Красный партизан», «Красный фронтовик», «Путиловка», «Трудовик», Киров, Ильич ячĕллĕ хуçалăхсен ертÿçисемпе специалисчĕсем те кăçалхи тухăçшăн кĕрешĕве пуçласа яма хатĕр пулни çинчен пĕлтерчĕç, – тет район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт-специалисчĕ Олег Новиков. – Çулталăкри тĕп пухура вĕсем кун пирки ял çыннисене тĕплĕн каласа пачĕç, çĕр ĕçĕпе вырăх-чĕрлĕх пăхас ĕç отраслĕсене малалла аталантарас тĕлĕшпе йышăннă пысăклатнă тĕллевсем çинчен чаркăнса тăчĕç.

Халĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн Николай Чугаровăн йышăнăвĕпе ял хуçалăх предприятийĕсене ертсе пыракансене явăçтарса районта кашни эрнерех канашлу ирттеретпĕр. Унта пуçлăхсен отчечĕсене итлетпĕр, вăл е ку техника паркĕнче çул тупнă çĕнĕлĕхсемпе паллаштаратпăр, уйрăм кооперативсенче асăрханă кăлтăк-çитменлĕхне пĕтерес енĕпе мĕн-мĕн туни çинчен калаçатпăр. Пĕтĕмлетсе калас-тăк – вăхăт пур çĕрте те çĕр ĕçченĕсене васкама хистет».

■ Геннадий КУЗНЕЦОВ

Ĕç тата çын

# «Исток» малаллах талпăнать

Канаш районĕнчи Пукăртанра пурăнакан Николай Павловăн ачалăхĕ çăмăл иртмен. «Атте эпĕ ултă-тăмĕш класра вĕреннĕ чухне аварие лексе сарăмсăр вилчĕ, – йывăррăн аса илчĕ иртнĕ кунсене Николай Григорьевич. – Вăл мана мĕн пĕчĕкрен техникăна юратма вĕрентни халĕ кулленхи ĕçре пулăшать çеç. Уроксем хыççăн машина-трактор паркне час-часах каяттăм. «Григорий Павлович, – тетчĕç ăна юлташĕсем, – ывăлу сана пулăшма çитрĕ». Механикăн ĕçĕ нумайччĕ çав. Анне, Алюстина Петровна, зоотехник пулнă. Вăл мана вырăх-чĕрлĕх тĕнчипе çывăхлатрĕ».


• Николай Павлов.

Техника паркĕнче ашшĕ çумĕнче тăтăшах сĕркеленекен арçын ачана «Мир» хуçалăх механизаторĕсем лайăх ас туса юлнă: унран çĕр-аннемĕре чунпа юратакан лайăх специалист пуласса туйнă. Аслăрах классенче вĕреннĕ чухне вырмара комбайнер пулăшаканĕ пулма шаннă. Ăсталăха туптас çул çине тăни ăна шкулта пулăшнă. Вăл тракторпа çÿреме хăвăрт хăнăхнă.

Николай Павлов шкул хыççăн Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтне инженер-механика вĕренме кĕнĕ. Виççĕмĕш курс пĕтерсен механизациленĕ стройотрядра Казахстанра тыр-пул пуçтарнă. Диплом илсен ăна направленипе Красноармейски районĕнчи «Нива» хуçалăха янă. Çав çулах кĕркунне салтака кайнă, çулталăк çурăран тăван яла таврăннă. Унтанпа паянччен савнă тăрăх ырлăхĕшĕн тăрăшать.

Профессионал шайне ÿстерсе пынине, пултарулăха куллен туптанине, хушнине тĕплĕ тунине хуçалăх ертÿçисем часах асăрхаççĕ, яваплăрах ĕçсене шанаççĕ. Николай Григорьевич трактор бригадин бригадирĕнчен «Мир» ЯХПК ертÿçине çитет, анчах хавшаса пыракан хуçалăх йывăрлăхсене чăтаймасăр панкрута тухасси патне çитнине вăхăтра ăнланса илет. 2003 çулта «Исток» ООО йĕркелет. Вунă çул хушшинче Николай Павлов çĕр лаптăкне хĕрĕхрен – 670 гектара, ĕне вырăх йышне улттăран 137 пуçа çитерет.

– Коллективра 13-15 çын ĕçлет, сезон вăхăтĕнче – ытларах, – тет вăл. – Пусă çаврăнăшĕнче пĕрчĕллĕ культурăсем 360 гектар йышăнаççĕ, кĕрхисене 100 га акнă, ыттинче çуртри пулĕ. Юлнă лаптăкра нумай çул ÿсекен курăк çитĕнтеретпĕр.

«Исток» обществăн 5 трактор, сеялка, косилка, комбайн пур. «Парк пуянах мар, анчах хальлĕхе мĕн пуррипе çырлахма тивет. Епле те пулин вăй çитерсе «Нива» вырăнне лайăхраххине туянмаллах», – тет ертÿçĕ.

Николай Григорьевич çак кунсенче 50 çул тултарчĕ. Ăна район администрацийĕн тĕп агрономĕ Валерий Долгов, ĕçтешĕсем, тăванĕсемпе юлташĕсем ăшшăн саламларĕç, телей, çирĕп сывлăх, ăнăçу суннĕç.

■ Валентин ГРИГОРЬЕВ

# Хыпарлав тытăмне çĕнетĕç

***Çак кунсенче Раççей МЧСĕн Атăлçи регион центрĕн комиссийĕ Чăваш Енре граждан оборони, халăха тата территорие çут çанталăк, техногенлă синкерсенчен хÿтĕлес, шыв объекчĕсенчи тата пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе пуш уйăхĕн 17-26-мĕшĕсенче ирттернĕ тĕрĕслевĕн кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ.***

Комисси ĕçленĕ май Чăваш Енре пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче централизациленĕ хыпарлавăн регионри тытăмĕн /вырăсла ăна РАСЦО теççĕ/ черетлĕ тĕрĕслевĕ иртрĕ. Çав кун «Внимание всем!» чĕнĕве 74 электросиренăпа, сасса вăйлатакан 52 хатĕрпе, çавăн пекех «Раççей-1», «Раççей-24», «Раççей-К» телеканалсемпе тата «Маяк», «Раççей радиовĕ», «Чăваш наци радиовĕ» радиоканалсемпе панă.

Аса илтеретпĕр: Чăваш Енре хыпарлав тытăмне 1977 çулта ĕçе кĕртнĕ. Тĕрĕслевсем аппаратура кивелнине, ăна юсаса çĕнетмеллине кăтартаççĕ. 2013 çулхи утă уйăхĕнче Чăваш Ен ГКЧСĕ асăннă тытăма модернизацилемелли проекта хатĕрлемешкĕн конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе «Ростелеком» АУОпа килĕшÿ тунă. Ку система Чăваш Енри пĕтĕм ял-хулана çавăрса илмелле, хыпарлав объекчĕсем пĕр-пĕринпе чăрмавсăр çыхăнассине тивĕçтермелле, халăх патне кирлĕ информацие çитерессин вăхăтне чакармалла. Çак хатĕрĕн тата кăтартусене памалли каналсен техника тăрăмĕн мониторингне талăкĕпех ирттерĕç.

Раççей МЧСĕн Атăлçи регион центрĕн пуçлăхĕ Игорь Паньшин генерал-лейтенант РАСЦО тĕрĕслевĕн пĕтĕмлетĕвĕсем пирки акă мĕн пĕлтернĕ: «Республика централизациленĕ хыпарлавăн регионри тытăмĕн проектне хатĕрлесе çитернĕ, вăл халĕ Мускавра. РАСЦО /КСЭОН/ çĕнĕ проектне тапхăрăн-тапхăрăн пурнăçа кĕртме юрать, ку ĕç валли пĕтĕмпе 200 млн ытла тенкĕ уйăрмалла. Республикăри хăрушлăх кăларса тăратма пултаракан объектсен шутне кура чи малтан мĕнрен пуçламаллине палăртма май килет. Эпĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен пуçлама сĕнеттĕм. Тĕрлĕ шайри администрацисен пуçлăхĕсене пĕрлехи ĕçе явăçтарăпăр. Республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа ку темăна сÿтсе явнă. Вăл йăлтах ăнланать, пур енĕпе те пулăшать».

■ И.СЕМЕНОВА

Хăрушсăрлăх

# Хăшĕ хаклăрах: пулă-и е пурнăç-и?

***Çанталăк ăшăтнăçемĕн пăр çÿхелсех пырать, çавăнпа ун çине кĕни сывлăхпа пурнăçшăн хăрушлăх кăларса тăратма пултарать. Шел, хăшĕ-пĕри çакна шута илмест те – инкеке лекет.***

Акă пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче çălавçăсем Атăлта икĕ пулăç кĕлеткине шыраса тупнă. Пиччĕшĕпе шăллĕ, 1957 тата 1964 çулсенче çуралнăскерсем, пĕр кун малтан Мускаш районĕнчи Шомик ялĕ çывăхĕнче пулă тытнă иккен. Вĕсенчен пĕрин хĕрĕ ашшĕ килне таврăнманран пăшăрханса полицие тата çăлав службине ирхине шăнкăравланă. Малтанласа палăртнă тăрăх – пулăçсем пăрлă шыва анса кайнă та çырана ишсе тухайман, унтах шăнса вилнĕ.

Çав кунах 14 сехетре çăлав службине Атăл леш енчи кану бази çывăхĕнче пĕр пулăç пăтăрмаха çакланни пирки хыпар çитнĕ. 50-ри арçын, Шупашкарта пурăнаканскер, çырана çитесси çĕр метр юлсан пулăха лекнĕ. Юрать-ха ăна пĕр çын ăнсăртран курнă, çăлавçăсене чĕнсе илнĕ. "Пулăç экстремаллă лару-тăрура çухалса кайман: шыв тĕпне анса каяс мар тесе çиййĕнчи тумне хывнă, çыран еннелле асăрханса шума пуçланă. Пăр унăн йывăршне чăтаймасăр çатăртатса çурăлнă. Арçын каллех шыва ÿкнĕ, тепре тухнă... Телее, пулăшу вăхăтра çитнĕ – çăлавçăсем вăйран кайнăскере хăтарнă", – терĕç Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пресс-службинче. Çырана çитсен пулăçа больницăна ăсатнă.

Çăлавçăсем пăр çинче пулă тытмалли тапхăр вĕçленнине, шыв объекчĕсене кĕни хăрушă пулма пултарнине аса илтереççĕ. МЧС ĕçченĕсем хальхи вăхăтра профилактика рейĕсене ытти чухнехинчен тăтăшрах ирттереççĕ. Патруль ушкăнĕсем çынсем пăр çине йышлăн тухакан вырăнсене тĕрĕслеççĕ.

■ И.БЕЛОВА

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Журналистсен пĕрлĕхĕн кун-ҫулĕ

**Чăваш Республикинчи Журналистсен союзне хăçан йĕркеленĕ? Пĕрлĕхĕн кун-çулĕ, историйĕ кăсăклантарать...**

**Р.КАТРАМОВ.**
Çĕмĕрле районĕ.




Пичет ĕçченĕсен пĕрлĕхне туса хурасси пирки 1920 çулхи раштавăн 2-мĕшĕнче Шупашкар хулин журналисчĕсен пухăвĕнче сăмах пуçарнă. Унтах пичет ĕçченĕсен професси-производство союзне йĕркелеме йышăннă. Бюро председательне Г.Кубарева суйланă.

1923 çулта пултарулăх союзне аталантарас енĕпе малалла ĕçленĕ. «Канаш» хаçат редакторĕ Н.Золотов пуçарнипе çĕртмен 30-мĕшĕ – утă уйăхĕн 1-мĕшĕсенче Шупашкарта пичет ĕçченĕсен пухăвĕ иртнĕ. Унта Чăваш Ен писателĕсемпе журналисчĕсен «Канаш» союзне йĕркеленĕ. Председателе Д.Эльмен журналист-публициста суйланă. Яваплă секретарь – Н.Золотов. Союз Уставне йышăннă, ăна 1928 çулта Чăваш облаç ĕçтăвкомĕ çирĕплетнĕ.

1923-1925 çулсенче «Канаш» пичет ĕçченĕсене пĕрлештерекен тытăм пулса тăнă, вĕсен пултарулăх ĕç-хĕлĕнче пысăк вырăн йышăннă. 1923 çул вĕçне союзра 40 ытла писательпе журналист шутланнă. 1924-1925 çулсенче журналистсен союзĕн пуçламăш организацийĕсем Шупашкар, Етĕрне хулисенче, Хĕрлĕ Чутайĕнче, Вăрмар районĕнчи Кавал ялĕнче йĕркеленнĕ.

«Канаш» союз пуçарнипе Шупашкарта «Сунтал», «Капкăн» журналсем, «Çамрăк хресчен» хаçат тухма пуçланă. 1925 çулхи юпан 14-мĕшĕнче Радио тусĕсен чăваш обществине йĕркеленĕ.

1925 çулта СССРта писательсен уйрăм организацине йĕркелес юхăм тапраннă. Нарăсăн 5-мĕшĕнче «Канаш» союз бюровĕ Пĕтĕм Раççейри пролетари писателĕсен ассоциацине кĕме йышăннă. 1926 çулхи юпан 8-мĕшĕнче союзăн 3-мĕш съезчĕ иртнĕ, вăл Чăваш пролетари писателĕсен учредительнăй съезчĕ пулнине пĕлтернĕ. Унăн председательне А.Золотов журналиста, литературоведа суйланă.

1957 çулхи утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче КПСС Тĕп Комитечĕ СССР журналисчĕсен съездне пухма йышăннă. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш обкомĕ СССР журналистсен союзĕн чăваш уйрăмне туса хума йĕркелӳ бюроне çирĕплетнĕ. Ертӳçи – «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ М.Якимов. 1957-1958 çулсенче хаçат-журнал, радио редакцийĕсенче, кĕнеке издательствинче союз тĕллевĕсене пичет ĕçченĕсем патне çитерме ăнлантару ĕç-хĕлĕ пуçланнă.

1959 çулхи пушăн 27-мĕшĕнче Шупашкарта СССР ЖС Чăваш уйрăмĕн учредительнăй съезчĕ иртнĕ. Унта союзăн тĕп тĕллевĕсен шутĕнче пичет ĕçченĕсен пĕлĕвне ӳстерессине, ĕç, кану условийĕсене лайăхлатассине, журналистсен социаллă тата право хӳтлĕхне вăйлатассине, ятсумне, чысне хӳтĕлессине кĕртнĕ.

Чăваш Республикинчи Журналистсен союзне М.Семенов /1959-1971/, П.Крысин /1971-1984/, Д.Семенов /1984-1989/, И.Кириллов /1989-1990/, А.Казанов /1990-1992/ ертсе пынă. 1992 çулта В.Комиссарова çирĕплетнĕ.

Союз ĕç-хĕлĕн тĕп çул-йĕрне съездсенче тата правлени ларăвĕсенче палăртаççĕ. Кварталта пĕрре пултарулăх организацийĕн правлени ларăвĕ пухăнать. Çулталăка пĕтĕмлетсе МИХсенче кун çути курнă чи лайăх материалсене Çемен Элкер, Н.Никольский, Л.Ильин ячĕллĕ республика премийĕсемпе чысласçĕ.

## Тараса тупнă

**Авалхи пуян пăлхарсем усă курма пултарнă тараса тупни çинчен илтрĕм. Хальхи вăхăтра ăçта упранать вăл?**

**А.ПЕТРОВ.**
Тăвай районĕ.



Удмурт Республикинче XII-XIV ĕмĕрсенче усă курма пултарнă тарасан пайĕсене тупнă. Хальхи вăхăтра вăл «Иднакар» музей-заповедникре упранать.

Тарасана пăхăрпа тăхлан хутăшĕнчен тунă, пĕчĕк-пĕчĕк йĕрсемпе тата пăнчăсемпе илемлетнĕ. Кăтартмăш те лаша, те аçтаха пуçне аса илтерет. Чашăк çакмалли сăнчăра е кантрана çирĕплетмелли рычаг вĕçĕсем юмахри чĕр чунсен пуçĕсем евĕрлĕ. Ахăртнех, тарасапа Пăлхар е Ылтăн Урта купсисем усă курнă, унпа вак укçа, техĕмлĕ çимĕç е хаклă ытти япала виçнĕ.

Специалистсем çакăн йышшисене хăй вăхăтĕнче Аслă Британире нумай тупнине çирĕплетеççĕ. Анчах ăсчахсем шăп та шай çакăн пек тараса пуррине пĕлмеççĕ.

## Чăваш Ене çитеймен

**Чăваш Енре крематори пур-и?**

**А.ФЕДОТОВ.**
Элĕк районĕ.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ А.Ладыков хальхи вăхăтра çĕнĕ масарсем валли лаптăксем уйăрма çĕр сахаллине палăртать. Çавна май вилесене çунтармалла тăвасси пирки пĕрре мар шухăшланă. Крематори çуртне тума мĕн чухлĕ укçа кирлине тата уттине пăхса тухнă.

Анчах ку ыйтăва çăмăллăн татса параймăн. Çĕнĕлĕх йӳнĕ марри куç кĕрет. Çынсен те хăнăхмалла. Пурте вилнĕ тăванĕсене çунтарма килĕшесси иккĕлентерет. Çĕр-шывра кун йышши учрежденисем ĕçлеççĕ.

Акă Чул хулара 2016 çул тĕлне 98 пин тăваткал метр лаптăк çинче крематори тата колумбари туса пĕтерме палăртаççĕ. Строительство хакĕ – 300 млн тенкĕ ытла. Хальхи вăхăт тĕлне проект патшалăх экспертизи витĕр тухнă.

## Ыр кăмăллăх концерчĕ

**Пĕрремĕш ыр кăмăллăх концертне кам, хăçан тата ăçта йĕркеленĕ?**

**Р.СУРКОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.



Ыр кăмăллăх концерчĕсем хальхи вăхăтра анлă сарăлнă акцисен шутĕнче. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче вара вĕсем çĕнĕлĕх пулнă. Пĕрремĕш хут çакăн йышши мероприятие Инди гитарисчĕ Рави Шанкар ыйтнипе 1971 çулта Джордж Харрисон йĕркеленĕ.

Тĕрĕсрех, кун пек концерт иккĕ те пулнă. Вĕсене пĕр кунтах, çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче, Бангладеш беженецĕсене пулăшма укçатенкĕ пухас тĕллевпе ирттернĕ. Сăмах май, ун чухне Бангладеш патшалăхĕ пулман-ха. Анчах çав вăхăтра ăна Пакистанран уйăрассишĕн вăрçă пынă. Кунсăр пуçне 1970 çул вĕçĕнче хĕвел тухăç бенгалецсен /Бангладешăн пулас халăхĕ/ "Бхола" циклона, 300000 ытла çын пурнăçне илсе кайнăскере, чăтса ирттерме тивнĕ.

Харрисон «Битлзри» ĕçтешĕсене /Ринго Стар, Боб Дилан, Эрик Клэптон/ тата ытти нумай çăлтăра пĕр сцена çинче пухма пултарнă. Концерт курма 40000 ытла çын пынă. Пухăннă укçана тӳрех вырăна ăсатнă. Анчах çак ĕç-хĕл самай шăв-шав çĕкленĕ. Кун евĕр акцисем халĕччен ирттерсе курманран нухрата шар курнисем патне çитермелли çул-йĕре йĕркелсе çитереймен. Укçана налук органĕсем концерт ыр кăмăллăх акцийĕ пулнине маларах асăрхаттарманран тытса чарнă.

Çапла вара карттă çине те ӳкерсе ĕлкĕреймен Бангладеш çĕршывне пулăшас тĕллевпе йĕркеленĕ концерт пĕрремĕш ыр кăмăллăх акцийĕ шутланать.

## Çеçпĕл музейĕ

**Канаш районĕнчи Çеçпĕл музейне хăçан уçнă? Унта аслă поэтăмăрпа çыхăннă мĕнле экспонатсем упранаççĕ?**

**А.АНДРЕЕВА.**
Чĕмпĕр облаçĕ.

«Çеçпĕл Мишшин тăван çĕршывĕ» ас тăвăм комплексне 1999 çулта чăваш поэзийĕн классикĕн 100 çулхи юбилейĕ тĕлне Канаш районĕнчи Çеçпĕл ялĕнче уçнă. Унăн тытăмне Чăваш наци музейĕн филиал музейĕ, вулавăш, ас тăвăм паркĕ, культура çурчĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса уçнă аллея кĕрет.

Музей экспозицийĕ Çеçпĕл Мишшин кун-çулĕпе, литература, революци ĕç-хĕлĕ пирки каласа кăтартать. «Поэтăн ачалăхĕ тата çамрăклăхĕ» пайра XIX-XX ĕмĕрсен чиккинчи чăваш ялĕпе паллашма, Кузьминсен пӳрчĕн макетне курма, ашшĕ-амăшĕ тата тăванĕсем пирки пĕлме, пулас общество деятелĕн комсомол çулĕсенчи çамрăклăхĕ пирки каласа кăтартакан документсене пăхма май пур.

Михаил Кузьмин Теччĕре /Тутарстан/ политика ĕçне кӳлĕннĕ. Ăна учительсен семинарийĕн иккĕмĕш курсĕ хыççăн судпа следстви комиссине ĕçе илнĕ. Çак вăхăтсене çутатакан экспозицире унăн характерĕ çирĕпленсе пынине кăтартакан сăн ӳкерчĕксемпе документсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем Михаил Кузьмич Кузьмин-Çеçпĕл тӳрĕ чунлă çын, наци чысĕн тĕслĕхĕ пулнине кăтартаççĕ.

Музейра Чăваш Автономи облаçĕн Ревтрибунал председателĕн ĕç пӳлĕмне «чĕртсе тăратнă». Çак должноçе М.Кузьмина 1920 çулта çирĕплетнĕ, каярахпа юстици уйрăмĕн пуçлăхне лартнă. Вăл революцие чунтан парăннă, ыттисене те çапла пулма хистенĕ. Анчах Çеçпĕл Мишшин идейисемпе ĕненĕвĕсем пурнăç чăнлăхĕсемпе хирĕçĕве кĕнĕ. Экспозицири документсем çакна туллин кăтартаççĕ. Чуна пусаракан йывăр шухăшсем Шупашкарта çырнă сакăр сăвăра палăрса юлнă.

Музей Чернигов облаçĕнчи Остер хулипе йĕркеленĕ çыхăнусене халалланă пай уйрăмах интереслĕ. Çак хулара Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕн юлашки кунĕсем иртнĕ. Украина поэтăн ал çырăвĕсене упраса хăварнă, унăн ятне историе тавăрса панă. Экспозицире Украина çĕрĕн вунвун делегацийĕ хăварнă документсем, кĕнекесем, парнесем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Музей ăслăлăх-тĕпчев ĕçне нумай вăхăт уйăрать, поэтăн пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе çыхăннă материалсем пухать, Çеçпĕл Мишши литература тата искусство деятелĕсемпе йĕркеленĕ çыхăнусене тупса палăртать, тĕпчет.

## Хăрах куçлă адмирал

**Нельсон адмирал нихăçан та чирлĕ куçне хупласа çӳремен теççĕ. Портретсем çинче вара ăна хура çыхăпа сăнарлаççĕ. Мĕншĕн?**

**О.БОЛОТИН.**
Куславкка районĕ.

Нельсонăн сылтăм куçĕ 1794 çулта Корсикăра Кальвие çавăрса илнĕ чухне вăйлă суранланнă. Французсен тупă йĕтри ăна хăйăрпа тата чĕлĕксемпе сирпĕтнĕ, куçне амантнă. Адмирал суккăрланман, куçĕ çиелтен пăхсан чиперех пек туйăннă. Çавна пулах Нельсон Аслă Британин тинĕс-çар вăйĕсен ертӳлĕхне инвалидлăхпа пенси тутарма аран-аран ӳкĕте кĕртнĕ.

Адмирал пурăннă çулсенче тунă портретсенче куçне хупланă Нельсона кураймăн. Трафальгар лапамĕнчи колонна та паллă адмирала çыхăсăр сăнарлать. Нельсон вилнĕ хыççăн кăна куçне хура çыхăпа хупласа ӳкерме пуçланă. Ахăртнех, портрет пафосне ӳстерес туртăмпа.

Сăмах май, сывă сулахай куçне



Нельсон хĕвел пайăркисенчен ятарлă куç хӳттипе, шлепке çумне çирĕплетнĕскерпе, хупласа çӳренĕ.

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**




2004 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Çул çинче*

# Çăлăнăç кӳрекен тормоз



***Çулсем çинчи инкексен тĕп пайĕ – транспорт хатĕрĕсем çапăнни тата çуран çынсене таптани. Аварисемшĕн тĕпрен илсен водительсем яваплă: вĕсен айăпĕпе Раççейре пĕлтĕр 180 пине яхăн инкек пулнă, çав аварисенче 23 пин ытла çын вилнĕ, 235 пин çын суранланнă. Çуран çынсем нумайăн шар кураççĕ.***

***Республикăра пулнă аварисен 35-40% – шăпах çуран çынсене таптанă тĕслĕхсем. 2013 çулта çавнашкал 722 инкек пулнă – 87 çуран çын пурнăçĕ татăлнă, 673-ĕн аманнă. Кашни виççĕмĕш тĕслĕх çынсем çул урлă каçакан вырăнсенче пулнă.***

## Шелсĕр статистика

Ыйту çивĕчлĕхĕ куç кĕрет. Çавăнпах ЧР ШĔМĕн Çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн управленийĕ ака уйăхĕн 15-мĕшĕччен «Тормоза пус!» социаллă кампани ирттерет. Çак тапхăрта ача сачĕсенче, шкулсенче, вузсенче хăрушсăрлăхпа çыхăннă тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ. Çулсем çинчи йĕркелĕх хуралçисем журналистсене те çак ĕçрен айккинче хăвармарĕç – иртнĕ ытлари кун Пĕтĕм Раççейри автомобилистсен обществин Чăваш Енри уйрăмĕн автошкулĕнче хăйне евĕрлĕ тĕл пулу иртрĕ. Ку çеç те мар: массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем руль умне ларса тормоза вăхăтра пуснин пĕлтерĕшĕ пысăккине хăйсем курса ĕненме пултарчĕç.

Асăннă кампани Раççейĕпех пырать. Мускавран «Хăрушлăхсăр çул çӳрев» эксперт центрĕн представителĕсем те килнĕ. Чăннипех интереслĕ калаçу пулчĕ. ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Романов пĕлтернĕ тăрăх – республикăра çулталăк пуçламăшĕнчи икĕ уйăхра 232 авари пулнă, вĕсенче 26 çын вилнĕ. Юлашки цифра пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен чылай пĕчĕкрех пулин те ПАИ ертӳçи ĕç-пуç çивĕччине пытармасть. Водительсем руль умне çав-çавах ӳсĕрле лараççĕ, вĕсен айăпĕпе 13 авари пулнă. 49 инкекшĕн çуран çынсем хăйсем айăплă – çав аварисенче 7-ĕн вилнĕ. Вĕсем юраман çĕрте çул урлă каçнă чух шар кураççĕ, водитель кĕтмен çĕртен çул çине тухса тăраççĕ. Ӳсĕрсем тенĕрен, эрех ĕçнĕ хыççăн транспорт хатĕрĕпе çула тухма шикленменнисем ытла та нумай – ӳсĕр пулнăшăн е медицина тĕрĕслевне кайма килĕшменшĕн 820 водителе тытса чарнă.

## Хăрушлăха хирĕç – пурте пĕрле

Владимир Геннадьевич та водитель тормоз педальне вăхăтра пуснин пĕлтерĕшĕ питех те пысăккине палăртать. Шел те, руль умне ларакансенчен нумайăшĕ машинăна тăруках чарма пĕлмест – хăнăхман. Автошкулсенче те унашкаллине вĕрентмеççĕ. Тĕттĕм чухне транспорт хатĕрĕ умĕнче çуран çын е пĕр-пĕр чăрмав кĕтмен çĕртен курăнса кайма пултарать – çакăн пек чухне нумай водитель çухалса каять. Кăтартăвĕ – çынсен вилĕмĕ. Çул йĕпе, пăрлак чухне хăрушлăх пушшех ӳсет. Çийĕнчен – машина хăвăртлăхĕ пысăк пулсан...

Çавăнпах ПАИ хăвăртлăха виçекен фотофиксаци приборĕсен шутне ӳстерме тăрăшать. ЧР транспорт министрĕн çумĕ Владимир Степанов пĕлтернĕ тăрăх – кăçал республикăра тата 40-е яхăн çавнашкал прибор лартасшăн. «Хăрушлăхсăр хула» программа та çулсем çинчи хăрушсăрлăха çирĕплетмешкĕн пулăшма тивĕç.

Инкеке лекнисен пурнăçне сыхласа хăварас тĕлĕшпе вăхăтра медпулăшу кӳни пĕлтерĕшлĕ паллă. Сывлăх сыхлавĕн министерствин пай пуçлăхĕ Евгения Гурьянова палăртнă тăрăх – Чăваш Енре аварисенче шар курнисене медпулăшу кӳме виçĕ шайлă тытăм туса хунă. Сурансен йывăрлăхне кура вăл е ку медучреждение леçеççĕ. Паллах, тепĕр чухне инкек хăш территорире пулнине те шута илме тивет – районăн е хулан çывăхри больницине ăсатаççĕ. Çапах кун пек тĕслĕхсенче те квалификациллĕ врачсемпе консультаци йĕркелес тĕлĕшпе чăрмав çук. Пулăшу кӳмелли тĕслĕхсен 90% васкавлă медпулăшу вырăна вăхăтра /20 минут таран/ çитет. Анчах, шел те, автоаварисенчи вилĕмсен 60% медиксем пырса çитиччен пулать. Кăçал министерство аварисенче шар курнисене пулăшмалли программăна хутшăнса тивĕçлĕ медоборудовани илĕ – çакă ĕçре пулăшмаллах.

Чăваш Енри автомобилистсен федерацийĕн техдиректорĕ Юрий Иванов иккĕленмест: пурте усă куракан çулсем çинче ашкăнас вырăнне ятарлă трассăсем çинче «пăс кăларса яни» лайăхрах. Федерацин çавнашкал икĕ трасса пур. Хĕлле Шупашкар заливĕнче те пăр трасса çине тухма пулать. Автомобиль спорчĕ республикăра та аталанса пырать.

Унччен чылай сахалрах пулнă, юлашки çулсенче вара федераци çуллен автомобилистсен 10-12 ăмăртăвне ирттерме мехел çитерет. Кăçал пĕтĕм Раççейри ăмăрту турне те йĕркелеме пултарнă. Ю.Иванов çамрăксем çак спортпа ытларах та ытларах туслашнине хавхаланса палăртрĕ.

• ➡ 6 стр.

*Айăплав*

# 24-шĕ те илĕртӳллĕ

***30-37 çулсенчи Константин Павлов, Евгений Беликов тата Владимир Ильин – вĕсем тĕлĕшпе Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ приговор палăртнă. Çак арçынсем проституци ĕçне чăннипех анлăн йĕркеленĕ.***

Следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ çирĕплетнĕ тăрăх – вĕсем 2009 çулхи çу уйăхĕнчен тытăнса 2012 çулхи çĕртме уйăхĕччен ĕçленĕ, саккунсăр бизнеса Шупашкарти тата Çĕнĕ Шупашкарти 17-40 çулсенчи 24 проституткăна явăçтарнă.

Притон Шупашкарăн çурçĕр-хĕвел анăç енчи районĕнчи пĕр хваттерте вырнаçнă. Саккунсăр ĕç-хĕле рекламăлассине ушкăн хăйĕн çине илнĕ – Интернетра пĕлтерӳсем панă. Паллах, секспа çыхăннă пулăшу ĕçĕсене çак притонра çеç кӳмен – тĕп хулари, химиксен хулинчи саунăсемпе хваттерсене те çӳренĕ. Хакĕ – сехетре 1–1,5 пин тенкĕ. Пĕр пайне проституткăсене хăйсене панă, тупăшăн тĕп пайĕ çак бизнес йĕркелӳçисен кĕсйине кĕнĕ. Çирĕп дисциплинăпа усă курнă: пĕр-пĕр саккаса пурнăçланă хыççăн каялла вăхăтра таврăнмасан, клиентсен кăмăлне тивĕçтермесен, ĕçкĕпе иртĕхсен, вăл е ку саккаса пурнăçлама килĕшмесен, проституткăсем клиентсене хăйсем тĕллĕн шырасан вĕсене штрафланă.

Суд Павлова 4 çуллăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă, Беликовпа Ильинăн – 2 çуллăх условнăй айăплав. Приговор вăя кĕмен-ха.

■ К.АНТОНОВ

# Взрыв пуласси пе хăратнă

***23 çулти А.Сорокина çав кун Çĕнĕ Шупашкар хулин шалти ĕçсен пайне ӳсĕр пулнăшăн илсе пынă. Административлă правăна пăсни çинчен протокол çырасса кĕтнĕ май йĕкĕт пусне усал шухăш пырса кĕнĕ.***

Кĕсье телефонĕ çумра – каччă полицирен полицие, Шупашкар хулин шалти ĕçсен управленине, шăнкăравланă, химиксен хулинчи Комсомол урамĕнчи пĕр çуртра взрыв хатĕрĕ вырнаçтарни, вăл сирпĕнесси пирки пĕлтернĕ.

Пакунлисен, паллах, тĕрĕслев ирттерме тивнĕ. Теракт пирки суйса пĕлтерни палăрнă хыççăн шăнкăрав авторĕн йĕрĕ çине часах ӳкнĕ. Сорокин хăйĕн айăпне йышăннă, çавна май уголовлă ĕçе уйрăм йĕркепе тишкернĕ. Ăна УК 207 статйипе айăпласа пĕр çулталăк ĕçлесе юсанмалли приговор палăртнă – çак тапхăрта унăн шалăвĕн 10% патшалăх хыснине кĕрĕ.

■ Н.АНТИПОВ

*Инкек-синкек*

# Вутра, шывра...

***Шел, иртнĕ эрне çынсен вилĕмĕпе çыхăннă инкексемпе те палăрса юлать. Çавнашкал тĕслĕх темиçе те пулчĕ.***

Элĕк-Ишек çул çинчи аварире икĕ çын пурнăçĕ татăлнă. Икĕ ВАЗ çапăннă – пĕри çулăн транспорт хирĕç килекен енне тухнă та... Пĕр машинăна 26-ри çамрăк хĕрарăм тытса пынă, теприн салонĕнче Етĕрне çамрăкĕсем пулнă. Аварире водительсем иккĕшĕ те вилнĕ, тата – пĕр пассажир. Иккĕмĕш ВАЗăн рулĕ умĕнче ларнă çынăн водитель удостоверенийĕ те пулман-мĕн.

Кĕçнерни кун ирхине вара Канашри Павлов урамĕнчи пĕр çуртра пушар тухнă. Ăна сӳнтернĕ хыççăн кĕл-кăмрăк айĕнче икĕ арçын виллисене тупнă, вĕсене тӳрех паллама та май килмен.

Çурчĕ – пĕр хĕрарăмăн, вăл кунта пурăнмасть, килкелесе кăна каять. Кĕркунне, хăй каланă тăрăх, кунта пĕр бомж иленнине пĕлнĕ. Хуçи ăна хăваласа яман – пурăнтăрах. Пӳртре электричество та, газ та пулман. «Хăна» çуртапа усă курнă. Тен, пушар шăпах çавăнпа сăлтавланнă пуль. Иккĕмĕш çынни вара кам? Хĕрарăм каланă тăрăх – бомж патне тусĕсем килкеленĕ, пушарта вилни шăпах вĕсенчен пĕри пулма пултарать.

■ Н.ДМИТРИЕВ

• ➡ 6, 11, 12 стр.

КРИМ

# Ҫӑлӑнӑҫ кӳрекен тормоз

/Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ 5-мӗш стр./.

## Вилӗм – темиҫе сантиметрта

«Тормоза пус!» акци валли ятарлӑ видеофильм та ӳкернӗ. Ӳкерӗве Раҫҫейри тата Пӗтӗм тӗнчери автомобилистсен ӑмӑртӑвӗсен чемпионӗн ятне темиҫе хут та тивӗҫнӗ Михаил Алешин пилота явӑҫтарнӑ. Вӑл ку енӗпе чӑнчӑн ӑста ӗнтӗ, анчах тормоза вӑхӑтра пусасси уншӑн та ҫӑмӑл мар иккен. Хӑйне евӗрлӗ сӑнав йӗркелӳҫисем условие палӑртаҫҫӗ: пӗр 100 метрта конус евӗр чӑрмав лартаҫҫӗ – вӑл ҫуран ҫынна «сӑнлать». Пилотӑн машинӑна лармалла та хӑвӑртлӑха ҫак дистанцире май пур таран ӳстермелле, хайхи «ҫуран ҫын» патне ҫывхарнӑ май тормоза пусмалла. Май пур таран ун патне ҫывӑхрах чарӑнмалла, анчах конуса «таптама» юрамасть.

Акӑ Алешин руль умне вырнаҫрӗ, хускалчӗ... Хӑвӑртлӑх самай пысӑк – тормоз! Кустӑрмасем асфальт тӑрӑх шӑхӑрса малалла шӑваҫҫӗ, машина бамперӗпе хайхи конуса пырса ҫапнӑ хыҫҫӑн тин чарӑнчӗ... Иккӗмӗш дубль: каллех ҫавнашкал ӳкерчӗк. Виҫҫӗмӗшӗнче тин автомобиль конус патне ҫитиччен маларах чарӑнчӗ. Вӑт, мӗнешкел ӑстасем те тормоз ҫулӗн тӑршшӗне тӗп-тӗрӗс палӑртаймаҫҫӗ те – ахаль водительсем пирки мӗн каламалли?

Ахаль водительсем вара, журналистсем, ҫак сӑнава автошкул автодромӗнче хӑйсем те хутшӑнчӗҫ. Ҫав шутра – ҫак йӗркесен авторӗ те. Кӗске инструктаж – руль умне вырнаҫатӑп. Рацине команда янӑрать: хускал! Тапранатӑп, пӗрремӗш передача, иккӗмӗш... Дистанци вӑрӑм мар та – виҫҫӗмӗш ҫине куҫса ӗлкӗрме ҫук, тормоза пусмалла... Пусатӑп! Кустӑрмасем ҫухӑраҫҫӗ – автомобиле шел /тепӗр тесен вӑл хамӑн мар-ха.../, хайхи конус патне ҫитиччен темиҫе метрта чарӑнтӑм. Ҫумри инструктор ӑс парать: «Сцепление малалла пусрӑн, ӑна тормозпа пӗрле тин пусмаллаччӗ». Юрать, шута илтӗмӗр. Тепӗр хут хӑтланса пӑхар. Машина малалла ыткӑнать – каллех тормоз. Ку хутӗнче конус патне ҫывӑхарах чарӑнтӑм, ҫапах пур пӗр пӗтӗмпех ӑнӑҫлӑ пулаймарӗ. Виҫҫӗмӗш хутӗнче те ҫаплах пулса тухрӗ.

«Ҫуран ҫын» патне ҫитиччен чарӑнтӑм, эппин, никама та таптамарӑм – ҫакӑ та аван», – хама ҫапла каласа лӑплантармалли ҫеҫ юлчӗ. Журналистсенчен хӑшӗ-пӗри вара авӑ конуса «таптама» та ӗлкӗрнӗ. Упражнение тунисенчен чи ӑнӑҫли – ПАИ пуҫлӑхӗ Владимир Романов: вӑл пӗрремӗш хутӗнчех машинӑна конусран темиҫе сантиметрта чарма пултарнӑ. Пӗлментуман автомобильпе вӗт – чӑннипех тӗлӗнтерчӗ. Юрӗ-ҫке, вӑл мар тӑк – тата кам?

## Ытла та вӑрӑм... тормоз ҫулӗ

Интереслӗ сӑнавсем вара ҫакӑнпа кӑна вӗҫленмерӗҫ-ха. Мускавран килнӗ экспертсем тормозпах ҫыхӑннӑ тепӗр сӑнавпа та тӗлӗнтерчӗҫ. Машинӑн сехетри хӑвӑртлӑхӗ 20 километр. Ак ҫакӑнта тормоз педальне тӗпне ҫитиччен тӑруках пуссан вӑл ӑҫта чарӑнӗ? Паллах, пӗлместпӗр. Ну, пӑхар-ха... Машина килет, тормоз... Кустӑрмасем кусмаҫҫӗ, анчах автомобиль пур пӗрех тормоза пуснӑ вырӑнта чарӑнмасть – инерципе малалла куҫать. Икӗ метртан тин чарӑнчӗ. «Вӑт, хӑвӑрах шухӑшласа пӑхӑр, 20 километрпа пырсан та ҫуран ҫын машина умӗнче тӑруках курӑнса кайсан транспорт хатӗрне тӳрех чарма ҫук», – комментари параҫҫӗ Мускав эксперчӗсем.

Ҫак упражнениех автомобиль хӑвӑртлӑхне 40 километр таран ӳстерсе туса кӑтартрӗҫ. Хальхинче, паллах, кустӑрмасем икӗ метр кӑна мар, чылай ытларах шуса кайрӗҫ. Унтан – 60 километр. Тормоз ҫулӗ темиҫе хут пысӑкланчӗ. Хулара ҫӳреме юракан хӑвӑртлӑх – шӑпах 60 километр, вӑт, ҫакнашкал хӑвӑртлӑхпа пырсан «зебра» патне ҫывхарнӑ май ӑна чакармасан инкек пуласси часах – водитель ҫул урлӑ каҫма тӑнӑ ҫынна асӑрхасан та, тормоза пуссан та машинӑна «зебра» ҫине кӗриччен чарса ӗлкӗреймӗ.



• Республика автоинспекцийӗн пуҫлӑхӗ В.Романов /варринчи/ тытса пыракан автомобиль шӑп та лӑп палӑртнӑ вырӑнта чарӑнчӗ.

Ҫакна ӗнентерекен тепӗр упражнени те пулчӗ. Хулара транспорт юхӑмӗ пысӑк пулнӑ май машинӑсем пӗр-пӗрин хыҫҫӑнах пыраҫҫӗ, дистанци 5-6 метр кӑна – кунашкал ӳкерчӗке куллен куратӑн. Ҫакӑнта хӑрушлӑх пур-и? Пур иккен – пысӑк хӑрушлӑх.

Икӗ машина – пӗр-пӗрин хыҫҫӑнах хускалаҫҫӗ. Малтин рулӗ умӗнче – эксперт, кайрине Автомобилистсен федерацийӗн ертӳҫи Юрий Иванов тытса пырать. Унӑн 5-6 метрлӑ дистанцие пӑхӑнса малти автомобильтен юлмалла мар. Йӗркеллех пыраҫҫӗ. Кӑштахран дистанци пысӑкланчӗ – ӑна тытса пыма ансат мар ҫав. Сасартӑк малти машина чарӑнчӗ. Хыҫалтин водителӗ тепӗр самантранах ҫакна ӑнланчӗ, тормоза пусрӗ, анчах... чарӑнса ӗлкӗреймерӗ.

Владимир Романов тӳрех «ну, протокол ҫырар...» тесе шӳтлерӗ-ха, анчах, хӑраса ан ӳкӗр, авари пулмарӗ. Экспертсем ҫапла пулма пултарассине малтанах пӗлнӗ ӗнтӗ, ҫавӑнпа кайри машина малти хыҫҫӑнах мар, унпа юнашар йӗрпе пычӗ. Хулари ҫулсем ҫинчи пек хыҫҫӑнах пынӑ тӑк, паллах, министр ҫумӗ эксперт автомобильне «купарчинчен» шаплаттаратчех. Питӗ лайӑх урок: «Реакци валли, малти машина тӑруках чарӑннине асӑрхаса тормоза пусмашкӑн, водителе пӗр ҫеккунт кирлӗ. Ҫав вӑхӑтрах 5-6 метрлӑ дистанцие хыҫа хӑвармашкӑн машинӑшӑн ҫур ҫеккунт та ҫителӗклӗ. Ку хӑвӑртлӑх 20 километрпа танлашнӑ чухне кӑна-ха. Хӑвӑртлӑх пысӑкрах тӑк – ҫав вӑхӑт пушшех кӗскелет», – ӑнлантарчӗҫ Мускаври килнӗ хӑнасем. Пӗр сӑмахпа, хӑвӑртлӑха юранинчен ӳстерни – хӑрушӑ, ҫавӑн пекех транспорт хатӗрсен хушшинчи дистанцие ытла та пӗчӗк тытса пыни те аварипе вӗҫленесси часах.

■ **Николай КОНОВАЛОВ.**

Автор сӑн ӳкерчӗкӗ



***Михаил АЛЕШИН, пилот, Раҫҫейри тата пӗтӗм тӗнчери автоӑмӑртусен нумай хут чемпионӗ:*** *Автоспорт – хӑрушлӑх. Ҫапах хула тӑрӑх ахаль ҫӳренӗ чухне те чӑрмав пайтах. Ҫавна май ҫул ҫинче йӑнӑшни инкек кӳрет. Манпа ахаль водитель хушшинчи уйрӑмлӑх пысӑк – эпӗ машинӑна ларнӑ май ҫакӑ мӗнпе вӗҫленессине лайӑх ӑнланатӑп. Ҫакна мӗн пур автомобилистӑн ӑнланмалла, ҫул ҫинче хӑрушлӑхпа ҫыхӑннӑ йышӑну тумалла мар.*

*Машинӑна хускатасси йывӑр мар. Ӑна чарма вӗренесси – ҫакӑ чӑн кӑткӑслӑх. Пысӑк хӑвӑртлӑхпа пынӑ чухне, ҫул пӑрӑнчӑкӗсенче чарӑнасси, кама та пулин пырса ҫапасран сыхланасси, хӑв чӗрӗ юласси – ҫакӑ профессионалӑн чӑн ӑсталӑхӗ. Тормоза пусма вӗренӗр. Ҫакӑ сирӗн пурнӑҫа ҫӑлса хӑварма пултарать.*

***Харпӑрлӑх***

# Правӑна регистрацилеме ан манӑр

***Росреестрӑн республикӑри управленийӗнче ҫакӑн пек тӗслӗхпе паллаштарчӗҫ: миравай судья йышӑнӑвӗпе Беловсен /упӑшкипе арӑмӗ уйрӑлнӑ/ хваттерне пайласа арҫынпа хӗрарӑмӑн тӳписене палӑртнӑ – 1/2 виҫепе. Анчах суд йышӑнӑвӗ хыҫҫӑн мӑшӑрсенчен пӗри те Росреестра килмен, хӑйсен правине регистрацилемен.***

Маларах хваттер тӗлӗшпе арӑмне регистраци удостоверенийӗ панӑ пулнӑ. Анчах суд йышӑнӑвӗ урӑхла пулнине пӑхмасӑр вӑл хваттере пӗтӗмпех хӑйӗн хӗрне парнеленӗ. Кайран унӑн экс-упӑшки парнеленин килӗшӗвӗ вӑйра мар тесе суда тавӑҫ тӑратнӑ. Хваттерӗн ҫур пайӗ унӑн-ҫке.

Суд тавӑҫа тивӗҫтернӗ, пурӑнмалли лаптӑкӑн 1/2 пайне арҫынна тавӑрса панӑ. Суд ҫирӗплетнӗ тӑрӑх – хваттере упӑшкипе арӑмӗ мӑшӑрланса пӗрле пурӑннӑ тапхӑрта туяннӑ, вӑл Беловсен пӗрлехи харпӑрлӑхӗ шутланнӑ. Вӗсен пӗрлехи харпӑрлӑх тӳпи пулнине кура суд Беловсен харпӑрлӑх пӗрлӗхӗн режимӗ суд йышӑнӑвӗ вӑя кӗнӗ хыҫҫӑн вӗҫленнине тӗпе хунӑ. Ҫав самантран хваттер пӗрлехи харпӑрлӑх тӳпин правипе килӗшӳллӗн енсен харпӑрлӑхӗнче пулнӑ.

РФ Гражданла процесс кодексӗн 246 статйипе килӗшӳллӗн пӗрлехи харпӑрлӑх тӳпинчи пурлӑхпа енсен ҫураҫса хуҫаланмалла. Ҫавна май хӗрарӑмӑн пӗтӗм хваттерпе мар, унӑн 1/2 пайӗпе ҫеҫ хӑй тӗллӗн хуҫаланма ирӗк пулнӑ.

Акӑ мӗншӗн суд йышӑнӑвӗпе ҫирӗплетнӗ правӑна регистрацилеме манмалла мар. Ҫапла тунӑ тӑк ку тӗслӗхре арпашу пулмастчӗ.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

***Тӗрӗслев***

# Явап тыттарни – саккунсӑр

***Прокуратура айӑпланине хӑнӑхнӑ, анчах тепӗр чух ҫак тытӑм, пачах тепӗр майлӑ, яваплӑхран хӑтарать те. ЧР юсанмалли учреждениссенче саккунсене пӑхӑннине сӑнаса тӑракан Шупашкар прокуратури ФСИН управленийӗн 3-мӗш колонийӗнче ирттернӗ тӗрӗслев кӑтартӑвӗсем – шӑпах ҫак ретрен.***

Прокуратура колонире ристансем тӗлӗшпе яваплӑх мерисемпе усӑ курмалли йӗркене пӑснине тупса палӑртнӑ. Калӑпӑр, М.-а кун йӗркине пӑхӑнманшӑн, ирхи апата вӑхӑтра /6 сехет те 35 минутра/ пыманшӑн, 7 талӑклӑха ШИЗОна хупса хунӑ. Тӗрӗслев вара ристана ҫав кун иккӗмӗш сменӑра ӗҫе илсе тухмалла пулнине ҫирӗплетнӗ. Кун йӗркипе килӗшӳллӗн иккӗмӗш сменӑра ӗҫлекенсен ирхи апат вӑхӑчӗ 11 сехетре кӑна пуҫланать. Эппин, М. йӗркене пӑсман.

Е тата Я.-на 10 талӑклӑха штраф изоляторне хупнӑ тӗслӗх. Вӑл та 17 сехет те 50 минутра каҫхи апатра пулман. Прокуратура тӗпчесе пӗлнӗ тӑрӑх – юсанмалли учреждени пуҫлӑхӗн йышӑнӑвӗпе ӑна йӗркене пӑснӑшӑн маларах 5 талӑклӑха ШИЗОна хупни палӑрнӑ. Саккунпа килӗшӳллӗн вара йӗркене пӑснин пӗр тӗслӗхӗшӗнех темиҫе хут явап тыттарма юрамасть.

Отряд пуҫлӑхӗсенчен пӗри айӑпланнӑ И.-не йӗркене пӑснӑшӑн выговор пани пирки справка ҫырнӑ. Темиҫе кун иртсен ҫав пуҫлӑхах тепӗр справка ҫырсаланӑ – ҫав ристанах тепре выговор панӑ. Анчах ҫирӗплетнӗ йӗркене пӑхӑнманшӑн выговорсем пирки И.-не хӑйне пӗлтермен.

Яваплӑх мерисемпе саккунпа килӗшӳллӗн усӑ курманнине тӗпе хурса прокуратура вӗсене тӑваттӑшне те пӑрахӑҫланӑ, ИК-3 пуҫлӑхӗн ячӗпе представлени ҫырнӑ, должноҫри ҫынсене явап тыттарнӑ.

■ **В.ШАШКОВ,**
**ЧР юсанмалли учреждениссенче саккунсене пӑхӑннине сӑнаса тӑракан Шупашкар прокурорӗн аслӑ пулӑшуҫи**

# Ертӳҫе дисквалификациленӗ

***Ҫӗмӗрле прокуратури «Комбинат» ЯХПКра ӗҫлев ҫинчен калакан саккунсене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗсленӗ те – ҫынсене вӑхӑтра шалу тӳлеменнине палӑртнӑ.***

Хуҫалӑх председателӗн Андриян Концовӑн айӑпӗпе 41 ӗҫчене вӑхӑтра шалу паман – парӑм 170 пин тенкӗ урлӑ та каҫнӑ. Ял хуҫалӑх кооперативӗн ертӳҫине ҫакнашкаллишӗн маларах та административлӑ майпа явап тыттарнине кура прокурор ку хутӗнче КоАПӑн 5.27 статйин 2-мӗш пайӗпе ӗҫ пуҫарнӑ. Административлӑ материала тишкернӗ хыҫҫӑн суд прокурор ыйтӑвне туллин тивӗҫтернӗ, «Комбинат» ертӳҫине ҫулталӑклӑха дисквалификациленӗ.

■ **Н.СТЕПАНОВ**

• ➡ 11, 12 стр.

ХЫПАР



*Аталану çулĕпе*

# Çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем палăртаççĕ

***Элĕк районĕнчи потребительсен общества çĕр-шыври кооперации тытăмĕнче чи лайăххисенчен пĕри пулнине çулран çул витĕмлĕ кăтартусемпе çирĕплетет. Унăн тĕрлĕ отрасле аталантарас тĕлĕшĕнчи опычĕпе тĕплĕнрех паллашса ĕçре усă курас текен те сахал мар. Элĕксем вара ӳсĕмсемпе лăпланса лармаççĕ: пурнăç, халăх ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллев палăртаççĕ. Тăрăшни сая каймасть: Элĕк райповĕ Чăвашпотребсоюз тытăмĕнчи экономика ăмăртăвĕнче темиçе çул ĕнтĕ малти вырăнсене йышăнать. 2013 çулхи кăтартусем тăрăх та ăна çĕнтерӳçĕ Дипломĕ тата куçса çӳрекен ялав парса чысларĕç. Сăмах май, райпо куçса çӳрекен ялава тăваттăмĕш хут тивĕçрĕ.***

*Реклама*



• *Райпо канашĕн ертӳçи Юрий Харитонов.*

### Апачĕ тутлă, паха

– Хуçалăхăн кашни отраслĕнчех хальхи технологисене, ял халăхĕн пурнăçне çăмăллатма пулăшакан меслетсене ĕçе кĕртес ыйтусене тĕп вырăна хуратпăр, – палăртать райпо канашĕн председателĕ, ЧР халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, район Пухăвĕн депутачĕ Юрий Харитонов. – Уйрăм ӳсĕмсене илес пулсан республикăри потребкооперации организацийĕсен пĕлтĕрхи ăмăртăвĕнче общепита, хатĕрлеве аталантарас енĕпе, халăхран сĕт, çĕр улми пухассипе, пылак шыв, çурма фабрикатсем туса кăларассипе пĕрремĕш вырăн йышăнтăмăр. Йăла пулăшăвне аталантарас, халăхран аш-какай, пахча çимĕç, тĕш тырă, улма-çырла, эмел курăкĕсем туянас тĕлĕшпе те малтисен йышне кĕме пултартăмăр. Райпон хастар, пуçаруллă ĕçченĕсене яваплăха туйса палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме ырми-канми вăй хунăшăн чĕререн тав тăватăп. Пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлесен кирек мĕнле йывăрлăха та çĕнтерме, халăх шанăçне тӳрре кăларма пултарăпăр. "Элĕк" суту-илӳпе пулăшу центрĕ пек çĕнĕ объектсем çĕклеме те, пуррисене тĕпрен юсаса хăтлăх кĕртме те, хатĕрлев-пулăшу ĕçĕсен калăпăшне ӳстерме те, лавккасемпе кафесен ассортиментне пуянлатма та вăй çитерĕпĕр.

Пĕлтĕрхи раштав уйăхĕн 13-мĕшĕнче хута кайнă "Элĕк" центр паян район çыннисемпе хăнисен юратнă вырăнĕ пулса тăнине палăртмалла. Райцентрти икĕ хутлă çак кермен автостанципе пасар çывăхĕнчех пулнăран килен-каяна кĕрсе тухма уйрăмах меллĕ. Чылайăшне иккĕмĕш хутри "Вкусно-Пицца" кафе илĕртет. Вăл паян тулли хăватпа ĕçлет. Меню, тĕпрен илсен, тухăç апат-çимĕçĕнчен тăрать. Ăсталăха куллен ӳстерсе пыракан поварсем 10 тĕрлĕ пицца, ролл, суши, салатсем хатĕрлеççĕ. Каçсерен кафене канма килекен çамрăксем ыйтнипе халĕ тата менюна сĕтлĕ коктейльсем кĕртнĕ. Тӳлевсĕр усă курмалли Интернет пур. Тутлă пицца тутанма уроксем хыççăн шкул ачисем йышлăн килеççĕ. Кафере çуралнă куна, ытти уява паллă тăвасси йĕркене кĕрсе пырать. Кăçал шкултан вĕренсе тухакансем те сыв пуллашу каçне çак кафере ирттересшĕн, заявкăсем пама пуçланă та ĕнтĕ.

– Кафе ĕçне çĕнĕлĕхсемпе пуянлатма ятарлă план хатĕрлерĕмĕр,– каласа парать общепит директорĕ Валентина Дмитриева. – Культура çуртĕнчи пултарулăх кружокĕсен ертӳçисемпе пĕрле ачасем валли сăнарлă уявсем ирттересшĕн. Саккассемпе тĕллевлĕ ĕçлетпĕр. Таксистсемпе ял çыннисем ыйтнă продукцие киле çитерсе пама килĕшӳ турăмăр. Сăмах май, килти уяв валли саккас парас тесен "Вкусно-Пицца" кафене 8-906-380-55-55 телефонпа шăнкăравлама пулать.

Валентина Петровна общепит тытăмĕнче ĕçе кĕртекен ытти улшăнупа та паллаштарчĕ: "Встреча", "Салам" кафесенче менюсене çĕнетнĕ, ытти апатлану предприятийĕнче те апат-çимĕç ассортиментне пĕр-пĕринчен хăйне евĕрлĕхпе уйрăлса тăмалла йĕркелесшĕн. Кукăль цехĕ çынсен кăмăлне тивĕçтерес тĕлĕшпе çаврăнăçуллă ĕçлет. Цех çумĕнчи лавккара торт, пицца, кукăль, ытти продукци туянма, саккас пама пулать. Çурма фабрикатсем те – хăвăрт саланакан продукци шутĕнче. Мĕншĕн тесен тавар туянакансем вĕсене пахалăхĕшĕн, экологи тĕлĕшĕнчен таса, халăхран пухнă аш-пăшран, тăпăрчăран, пахча çимĕçрен тутă кĕртекен хушăмсемсĕр хатĕрленине лайăх пĕлеççĕ.

Центрăн пĕрремĕш хутĕнче райпон 3-мĕш аптека пункчĕ ĕçлет. Унăн эмелсем, профилактика-сиплев хатĕрĕсем сутма ирĕк паракан лицензи те, сертификат та пур. "Мĕн кирли йăлтах çителĕклĕ. Пĕрпĕр препарата паян заявка парсан тепĕр куннех илсе килеççĕ,– тет Эльвира Чугунова фармацевт. – Ялсенчен килекен нумай, аптекăна автостанци çумĕнчех уçнишĕн кăмăллине палăртаççĕ". Калаçăва Элĕкре пурăнакан Людмила Петрова пенсионерка хутшăнчĕ. "Малтанхи пулăшу пуххи – бинт, мамăк, йод – кирлĕ пулчĕ. Юрать, аптека юнашарах, – хыпкаланарах сăмахларĕ вăл. – Райпо пуçлăхĕсене çынсен шухăшне шута илнĕшĕн ырламалла. "Заходи" лавкка çуртĕнче те аптека уçасса кĕтетпĕр. Çӳреме çывăхарах пултăр тетпĕр-çке".

### Халăха – пысăк пулăшу

Çанталăк ăшăтса, кун вăрăмланса пынă май çурт-хуралтă лартма, юсама меллĕ тапхăра кĕретпĕр – ял халăхĕ строительство




• *«Вкусно-Пицца» кафери Марина Васильева поварпа Надежда Николаева буфетчица хăнасене кĕтсе илме хатĕр.*

материалĕ ытларах туянма пуçлать. Райпо правленийĕн председателĕ Татьяна Иванова палăртнă тăрăх – çуллана хирĕç блок, кирпĕч, профнастил, металлочерепица, цемент хатĕрлесе хуракансен йышĕ ӳссех пырать. Çак сферăра конкуренци пĕчĕк мар пулин те халăх райпо пулăшăвĕпе туллинрех усă курма тăрăшать. Пĕрремĕшĕнчен, вăл сĕнекен строительство материалĕсен ассортименчĕ пуянрах – суйламалăх пур. Иккĕмĕшĕнчен, юлашки çулсенче халăха меллĕрех, çăмăлрах пултăр тесе ĕçе çĕнĕлле йĕркеленĕ: калăпăшлă строительство материала килех çитерсе, кăтартнă вырăна пушатса пăраççĕ. Тиев-пушату ĕçне "КамАЗ" автомашинăсем çине вырнаçтарнă манипуляторсемпе пурнăçлаççĕ. Виççĕмĕшĕнчен, строительство материалĕсене райпона сутнă сĕт, ытти ял хуçалăх продукцийĕ, кредит шучĕпе туянма пулать.

– Халăхран сĕт пухас енĕпе Кĕçĕн Тăван тата Çирĕккасси лавккисем лидерсем шутланаççĕ, – тет Татьяна Владимировна. – Вĕсем стройматериалсем сутас енĕпе те малта. Тĕслĕхрен, Çирĕккасси лавкки çывăхри районсенчи халăхпа та лайăх ĕçлет, пĕлтĕрхи кăтартусемпе районта пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

– Ял çыннисен пурнăçне çăмăллатас, вăхăтра пулăшас тĕлĕшпе райпо нумай тăрăшать. Пӳрт тăрри йăшнăччĕ. Саккас патăмăр та, профнастил туххăмрах илсе пычĕç. Кирпĕчпе те чăрмав пулмарĕ. Юрий Александрович пултаруллă ертӳçĕ пулнине палăртас килет, халăх нушине ăнланать, ĕçе килĕшӳллĕ йĕркелеме пĕлет,– тет Вутланра пурăнакан Тамара Федорова.

Райпо сĕнекен хушма тупăш мелĕсемпе анлă усă куракан чылай. Сĕт, самăртнă сысна, пăру, ĕне, вăкăр, çĕр улми, пахча çимĕç сутаççĕ. Райпо вара халăх валли заявкăсем тăрăх сысна çӳрисем, чăх-чĕп илсе килет, вырăнах çитерсе парать. Выльăх-чĕрлĕхе тăрантарма тырă ыйтакан та сахал мар, хĕлĕпе 700-800 тонна саланать. Райцентрти пасар территорийĕнче вырнаçнă ветеринари аптекинче чăх-чĕп, сысна çӳрисем, ытти выльăх валли ятарлă комбикорм туянма пулать.

– Икĕ ĕне усратпăр, райпона куллен 15-20-шер литр сĕт паратпăр. Усси пур: сĕтшĕн кирлĕ чухлĕ строительство материал, удобрени, выльăх апачĕ илетпĕр,– çирĕплетет хатĕрлев кантурĕн кладовщици Зоя Никифорова.

Зоя Алексеевна хăйĕн тĕп тивĕçне пысăк яваплăхпа пурнăçланипе те палăрса тăрать. Нумай пулмасть ăна ĕçри ӳсĕмсемшĕн ЧР халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне панă. Вăл райпона 1979 çулта килнĕ, унтанпах эмел курăкĕсем пухас ĕçе йĕркелесе пырать. Çулталăкра 500 килограмран пуçланă та паянхи куна 30 ытла тоннăна çитернĕ. Çынсемпе ку ыйтупа часчасах тĕл пулса калаçни, мĕнле ӳсен-тăран пухмаллине, вĕсен пахалăхĕ мĕнле пулмаллине, çак ĕç тупăшлине ăнлантарни ӳсĕмлĕ витĕм кӳнĕ. Халĕ 36 тĕрлĕ эмел курăкĕ пухса типĕтеççĕ, экологи тĕлĕшĕнчен таса тăрăхра ӳсекен чĕр тавара пысăка хурса хаклакан регионсенчи /çав шутра – Мускаври, Питĕрти/ фармацевтика предприятийĕсене ăсатаççĕ. «Хăшĕсем сезон вăхăтĕнче ку ĕçе çемйипех хутшăнаççĕ, 60 пин тенкĕ таран ĕçлесе илеççĕ. Пенсионерсемпе шкул ачисем уйрăмах хастар», – палăртать Зоя Никифорова. Паян хатĕрлев кантурĕнчи сушилкăра фармацевтсен заявкисене тивĕçтерсе хĕрлĕ пилеш типĕтеççĕ. Унтан эмел курăкĕсен вăхăчĕ те çитĕ.

**Алина ЛУКИЯНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем




• *3-мĕш аптека пунктĕнче çын яланах нумай.*



# Сочи çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм парнелерĕ

***Олимп тата Паралимп вăййисен тĕп хулине Чăваш Енрен вун-вун çын çитсе курнă, 200 яхăн волонтер тата 11 судья спорт объекчĕсенче ĕçленĕ. Сочирен епле кăмăл-туйăмпа таврăннă-ха пирĕн ентешсем? Хăшĕ-пĕринпе тĕл пулса калаçма май килчĕ.***

Сочие Мускав автомобильпе çул-йĕр институчĕн Шупашкарти филиалĕнчен 76 студент кайнă. Транспортçăсем вокзал-аэропортра хăнасене кĕтсе илнĕ, ăсатса янă, спортсменсене ăмăрту вырăнне çитме пулăшнă, автомобильсен юхăмне йĕркеленĕ. Акă 5-мĕш курс студенткине Ксения Александровăна Хĕрлĕ уçланкă ытларах кăмăла кайнă: "Питĕ илемлĕ! Тинĕсĕн вĕçĕ-хĕрри курăнмасть, çӳллĕ сăртсем чуна тыткăнларĕç. Çанталăкĕ еплерех ăшăччĕ тата. Мана уйрăмах "Çунашка" тата "Роза-Хутор" керменсенче килĕшрĕ. Хамăн та çуна çине ларса ярăнас, йĕлтĕр çине тăрса тăвайккинчен анас килчĕ. Хăçан та пулин унта тепĕр хут кайса хăмăн ĕмĕте пурнăçлатăпах", – çунатланчĕ пике. Палăртмалла: Сочирен таврăннă студентсене институтра ăшшăн кĕтсе илнĕ, аслă шкул ертӳçисемпе ЧР Вĕренӳ министерствин ĕçченĕсем Тав хучĕсемпе тата тĕрлĕ парнепе чысланă.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн юридици факультетĕнче вĕренекен Алексей Пантелеймонов сăрт-ту йĕлтĕрçисен "Роза-Хутор" центрĕнче тăрăшнă. Унта вăл нимĕççемпе туслашнă. Вăл каланă тăрăх – вĕсем çав тери ырă кăмăллă та хаваслă çынсем. Паралимп вăййисен чемпионки Анна Шаффельхубер вара ăна хăйĕн хастарлăхĕпе тĕлĕнтернĕ. Алексейăн юлташĕ, Ксения Комарова пулас экономист ăмăртусем пуçланнине халалланă уява курнă кăна мар, ăна йĕркелес ĕçе хутшăннă: пике "Фишт" стадионта ĕçленĕ. "Чи малтанах мана кермен капмарлăхĕ тĕлĕнтерчĕ, çав тери пысăк вăл. Уяв вăхăтĕнче "Фишт" кĕрлесе тăчĕ. Çынсем керментен çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа тухрĕç, вĕсен куçĕнче иксĕлми савăнăç хĕмленчĕ", – терĕ пике.

Медицина учрежденийĕсенче тăрăшакансем те тĕнчери чи пысăк пулăмран юлас темен, пĕр ушкăн Сочие çитсе спортсменсемшĕн "чирленĕ". Акă Шупашкарти республика клиника больницин врачĕ Андрей Дмитричев çапларах аса илет: "Сочире икĕ кун пурăнтăм, унтан хавхалануллă туйăмпа таврăнтăм. Малашне аса илмелĕх, ачамсемпе мăнукăмсене каласа кăтармалăх пур. Эпĕ хоккей матчĕнче пултăм, хĕрарăмсем те арçынсем пек патваррăн выляççĕ иккен. Çавăн пекех çунапа ярăнакансен тупăшăвне те сăнама май килчĕ. Олимп паркĕ вара тĕлĕнтерчĕ, пĕр кунра утса тухаймăн пулĕ. Хĕрлĕ уçланкăра уçăлса çӳрерĕмĕр, Олимп çулăмĕ умĕнче сăн ӳкерĕнтĕмĕр", – терĕ ентешĕм. Унăн ĕçтешĕ, Çĕнĕ Шупашкар хула стоматологийĕн поликлиникин врачĕн Екатерина Егоровăн та каламалли сахал мар: "Сочири тăвата кун хăйне уйрăм пурнăç, пулăмсенчен пуян пулчĕ. Чылай çынпа паллашрăм. Пирĕн çĕр-шывра та çакнашкал тĕлĕнтермĕш пурришĕн мăнаçлантăм. Конькипе чупакансен тата трамплинран сикекенсен турнирĕсене çитсе куртăм. Керлингçăсен тупăшăвне сăнама чăтăмлăх кирлĕ, çапах кăмăла кайрĕ: хамăн та выляса пăхас килет. Киле таврăнсан бассейна çӳреме тытăнтăм, "Сокол" стадионта конькипе ярăнма пуçларăм".

"Чаплă капмар керменсем, тасалăх, ырă кăмăллă волонтерсем... Пирĕн çĕр-шывах-и ку текен шухăш та пулчĕ пуçра. Унта лару-тăру Европăри пекех. Пурте савăнăçлă, пĕр-пĕринпе ăшшăн калаçаççĕ", – хавхаланчĕ Çĕрпӳри интернат шкул директорĕ Геннадий Слепов. Вăл тата Çĕмĕрлери "Елочка" ача çурчĕн директорĕ Любовь Шинкаренко ертсе пынипе тăлăх ачасен пĕр ушкăнĕ Паралимп вăййисене çитсе курнă. Вĕсем пĕлтернĕ тăрăх – ачасем керлингпа слалом турнирĕсене сăнанă. Çĕрпӳсемпе Çĕмĕрлесем çавăн пекех Корея культурипе, наци ташшипе паллашнă, 2018 çулта Олимпиада унта иртет-çке.

Çĕнĕ Шупашкарти 2-мĕш спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ Андрей Михайлов чылай турнирта спортсменсен тупăшăвне хакланă, тĕнчери чи пысăк ăмăртура пĕрремĕш хут ĕçлеме тӳр килнĕ ăна. "Сочире Олимп тата Паралимп вăййисем пуласси пĕлсенех унта хутшăнма тĕллев лартрăмăр. 2011 çулта йĕлтĕрçĕсемпе биатлонçăсен Ханты-Мансире иртнĕ тĕнче чемпионатне кайрăмăр. Каярах – çĕр-шыв чемпионачĕ, тĕнче кубокĕ... Çак ăмăртусенче пухнă опыт Паралимпиадăра нумай пулăшрĕ. Сусăр спортсменсемпе ĕçлеме çăмăл мар. Кашни хăйне евĕр, кашнин уйрăм тĕнче, çавăнпа вĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле. Трасса çинче вĕсем олимпçăсенчен хăюллăрах та хастартарах, пĕр вăй юлмиччен тупăшма хатĕр", – пĕлтерчĕ йĕлтĕрçĕсемпе биатлонçăсен стадионĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ ентешĕмĕр.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

*Шăпа*

# Мăнукĕсем ăрăва малалла тăсаççĕ

***Ашшĕ хăйне: «Эх, мĕншĕн ывăл пулман-ши эсĕ?» – тени Галина Семеновнăн асĕнчен халĕ те тухмасть. Пĕчĕк чухнех вăр-вар та лара-тăра пĕлмен ачаччĕ вăл. «Класра улттăн вĕренеттĕмĕр, пилĕк арçын ача хушшинче – пĕр хĕр ача. Вĕсене кура хăюллă пулма, йывăрлăха çĕнтерме хăнăхса çитĕнтĕм, – сăмах çăмхине сӳтет вăл. – Пăчкă-пуртă та алăран кайман. Пӳрнесенчи суран çĕвви – çав вăхăт палли».***

Галина Герасимова Комсомольски районĕнчи Хирти Шăхасанта çуралса ӳснĕ. Вĕренӳре те, ĕçре те маттур пулнă. Каникул кунĕсенче шкул ачисен бригадине ертсе пынă. Куккурус çитĕнтерес ĕçе хастар хутшăннăшăн телекурав кăларăмĕ валли ӳкерсе кайнине ăшшăн аса илет. Çĕнĕ Кипеçри вăтам шкулта саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухне «Артек» лагерьте канма тивĕç пулнă тата.

«Республикăри район-хуларан çирĕм иккĕн кайрăмăр. Килтен чăваш тĕрриллĕ кĕпе, саппун, тутăр илнĕччĕ те лагерьте тантăшсене хамăр юрă-ташăпа савăнтарса малти вырăна тухнăччĕ», – тет Галина Семеновна.

Вĕрентекен пулас ĕмĕтпе çунатланнă вăл. Шкул пĕтерсен педучилищĕне кайнă. Пĕлӳ учрежденине кĕрес текенсен ун чухне икĕ çулпа танлашакан стаж кирлĕ пулнă. Вăл çуккипе хĕре вĕренмешкĕн йышăнман. Паллах, кăмăлĕ хуçăлнă. Анчах алла усман – Нĕркеç шкулĕнче пионервожатăя вырнаçнă. Каярахпа бухгалтера вĕреннĕ, кирпĕч заводĕнче, участок больницинче шут ĕçĕнче тăрăшнă. Сыватмăшри тухтăрсем çынсене сиплесе ура çине тăратнине кура кун-çулне медицинăпа çыхăнтарма тĕв тунă – 1965 çулта училищĕне кĕнĕ. Йăмăкĕ те медицина сестри пулма хатĕрленнĕ, асли – Шупашкарта, кĕçĕнни – Канашра. Амăшне укçатенкĕ тĕлĕшĕнчен çăмăлрах пултăр тесе Галина вĕреннĕ вăхăтрах садикре ĕçленĕ.

Пĕлӳ илнĕ хыççăн тăван района таврăнса Аслă Çĕрпӳел больницине вырнаçнă. Иван Герасимовпа çемье çавăрсан Нĕркеçе куçнă.

«Икĕ ял халăхĕшĕн Галя аппа пулса тăтăм, – тет Галина Семеновна çав çулсене аса илсе. – 40 çула яхăн ĕçлесе ентешсен, вĕсен ачисен сывлăхне çирĕплетессишĕн тăрăшрăм. Фельдшер кӳршĕ район çынни пулнă май канмалли кунсенче ĕç хыççăн пурте ман пата пулăшу ыйтма пынă. Икĕ ялта эпĕ кĕрсе курман кил юлман. Çĕрле чĕнеççĕ-и е уявра-и – вĕсен вырăнĕнче хам мĕн тунă пулăттăм тесе шухăшланă, сиплеме кирлĕ хатĕре пуçтарса чирлĕ çын патне васкана».

Нĕркеçри медпункт халĕ пысăк та хăтлă çуртра вырнаçнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче кун пекки пулман вĕт, çулĕсене те асфальт сарман. Район центрĕнчен аякра вырнаçнипе чылай нушаланма тивнĕ.

Галя аппа çине тăнипе, чирлисемшĕн меллĕ пултăр тесе тата медсестра çывăхра пурăннине тĕпе хурса медпунктăн çĕнĕ çуртне çул хĕррине лартнă.

Галина Семеновна – ялти ятлă-сумлă çын. «Эпĕ пулăшнипе сывалнă ентешсене курсассăн чунăм савăнать. Вĕсен савăнăçĕпе хуйхи-суйхине пĕрле пайларăмăр вĕт. Кун-çулăма усăсăр ирттермерĕм, ăна тăван ен халăхĕн сывлăхне тĕреклетме халалларăм», – темешкĕн унăн ирĕк пурах. Çакна хăйĕн ырă та пархатарлă ĕçĕпе, ăшă кăмăлĕпе çĕнсе илнĕ. Халăх ăна яланах ĕненнĕ: ял Канашĕн депутатне ултă хут суйланă, хĕрарăмсен канашне, ачисем вĕреннĕ чухне ашшĕ-амăшĕн комитетне ертсе пыма шаннă. Герасимовсем суйлав комиссийĕсен ĕçне пуçаруллă хутшăннă.

Вăл – донор, тӳлевсĕр 35 хут юн панă.

Хăй çурма тăлăх çитĕннĕрен сахал тупăшлă çемьесенче ӳсекенсен нушине чунпа туять, яланах пулăшать, ал ĕçĕнче ăста пулнипе вĕсене тĕрлĕ тум çыхса парать.

Галина Семеновна пурнăçра хура-шур, савăнăç-телей сахал мар тӳссе ирттернĕ. Вăрçăран аманса таврăннă ашшĕ 1953 çулта çĕре кĕнĕ, тăватă ачине амăшĕ хăрах çунат айĕнче çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Çурма тăлăха юлнăскерсене патшалăх пĕр пус парса та пулăшман. «Ун чухне медицина паянхи пек аталаннă тăк аттене çăлса хăварма пулатчех», – çапла шухăшлать кун-çулне сывлăх сыхлавĕпе çыхăнтарнăскер.

Амăшĕнчен те 23 çулта юлнă вăл. Мăшăрĕ Иван Семенович çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлнă. Галя аппан хунямăшĕ 71 çулта çĕре кĕнĕ. Вĕсем килĕштерсе, пĕр-пĕрне хисеплесе пурăннă. Кинĕ ăна яланах ырăпа аса илет.

Галина Семеновнăн куç тулли телейĕ, савăнăçĕ – икĕ ывăлĕн çемйисем. Асли Шупашкарта тĕпленнĕ, кĕçĕнни – тăван ялта. Кинĕсем хунямăшне хисеплеççĕ. Пилĕк мăнукĕ ăрăва малалла тăсать.

Çывăх çыннисем иртнĕ кунсенче тăван килте уяв сĕтелĕ хушшине пухăнса Галина Семеновнăна 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламласа, нумай пурăнмашкăн ырлăх-сывлăх сунса амăшĕн, асламăшĕн чунне ăшăтрĕç. Чăннипех хĕпĕртерĕ ĕç ветеранĕ, хăйне телейлĕ туйрĕ.

**Ольга ПОТАПОВА.**
Комсомольски районĕ,
Нĕркеç ялĕ



*Курав*

# Пикассо йыхравлать

***ЧР Художниксен союзĕ вырнаçнă çуртра /Шупашкарти К.Иванов урамĕ, 71/ нумаях пулмасть тĕлĕнмелле курав уçăлнă. Иртнĕ ĕмĕрти тĕнчипе паллă Пабло Пикассо ӳнерçĕн уйрăм çынсен пуххисенче упранакан 61 ĕçĕ Чăваш Ен куравçисем патне çитнĕ.***

Пабло Пикассо – чăн-чăн гени. Вун-вун пин произведени авторĕ, çĕнĕ стильсене «симĕс çутă» паракан çын пирки çапла каланă пулнă: «Çирĕммĕш ĕмĕр мăнаçлăхĕ ăна çеç тивет, Пикассо – çирĕммĕш ĕмĕр çынни».

Ӳнерçĕ 91 çул пурăннă, хăй хыççăн вышкайсăр пысăк еткер хăварнă. Çав пуянлăхăн пĕр пĕчĕк пайĕ – Чăваш Енре. Куравра «кубизмран» пуçласа авангард, ытти стильпе пурнăçланă ĕçсем вырăн тупнă. Пичет графикин произведенийĕсем те чуна пырса тивеççĕ.

**Надежда СМИРНОВА.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

КРИМ

## Çын тата саккун

# Çар службинчен пăрăнсан...




***Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче Раççейре çуркуннехи çар призывĕ пуçланать. Ун умĕн РФ Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕ çар службинчен пăрăннă тĕслĕхсемпе пуçарнă уголовлă ĕçсене тĕпчение пĕтĕмлетнĕ.***

РФ Конституцийĕн 59 статйипе килĕшӳллĕн Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесси Раççей гражданинĕн тивĕçĕ шутланать. Шел те, хăшĕсем çак тивĕçе туймаççĕ çав. 2013 çулта Шупашкарта призывран пăрăннă тĕслĕхпе пĕр уголовлă ĕç пуçарнă. Паллах, нумай мар, анчах вăл та ыттисемшĕн урок пулмалла.

Палăртни вырăнлă: призывран пăрăннăшăн УК 328 статйипе айăплаççĕ. Çара каяссинчен хăтармалли саккунлă сăлтавсем çук тăк – яваплăх тивет. Призыв пуçланасси çинчен РФ Президенчĕ указ кăларса пĕлтерет. Çара каяссинчен хăтармалли сăлтавсен шутĕнче – сывлăха пула çар службине юрăхсăрри, альтернативлă службăра пулни, преступленишĕн судпа айăпланни.

Çар комиссарĕн повесткине панă хыççăн çар чаçне каймашкăн комиссариата, сбор пунктне пымасси призывран пăрăнни шутланать. Тата – çын хăйне суран кӳни, призывран хăтăлас тĕллевпе суя документсем илни. Шута илмелли сăлтавсен ретĕнче вара – призывникăн çывăх çынни вилни, сирсе яма май çук чăрмавсем пулни. Паллах, çакна документсемпе çирĕплетмелле. Çак преступлени «вăраха пыраканнисен» шутне кĕрет. Урăхла каласан вăл тарса çӳрекен çын призыв /сбор/ пунктне пыриччен е ăна тытса чариччен тăсăлать.

27 çул тултарнă хыççăн призывран пăрăннăшăн асăннă преступление çак çулччен тунисем çеç явап тытаççĕ. Судсем асăннă йышши преступленисене тишкернин практикине пăхас тăк – саккуна пăснисене тĕпрен илсен штрафлапипе çырлахаççĕ. Пирĕн пай пĕлтĕр суда ярса панă уголовлă ĕçпе çамрăк çынна 120 пин тенкĕлĕх штрафланă. Халĕ следстви пайĕ çакнашкал тепĕр ĕçе тĕпчет.

**Евгения КАЗАНКОВА,**
**СК Шупашкарти пайĕн ертӳçин аслă пулăшуçи**

## Статистика

# Преступленисем те шута юратаççĕ

***Республика прокуратуринче Чăваш Енĕн право хуралĕн органĕсен ертӳçисен координаци канашлăвĕн ларăвĕнче право статистикин çивĕч ыйтăвĕсене пăхса тухрĕç. Тĕл пулăва республикăн право хуралĕн органĕсен, районсен полицийĕпе прокуратурисен ертӳçисем, наркотĕрĕслев, следстви тата дознани органĕсен представителĕсем хутшăнчĕç.***

Преступленисене шута илессине статистикăпа çыхăннă дисциплина ыйтăвĕсене ведомствăсен пĕрлехи ятарлă ĕç ушкăнĕсенче, координаци канашлăвĕсенче, прокуратура коллегийĕнче макарах та пĕрре кăна мар тишкернĕ. Çапах Чăваш Енре регистрациленĕ преступленисен шучĕ пĕлтĕр 14,4% чакнă пулин те прокурорсем саккуна пăснă тĕслĕхсене тупса палăртасси ӳсни пăшăрхантарать. Иртнĕ çул право хуралĕн органĕсен сотрудникĕсем преступленисене шута илнĕ чухне саккуна уяманнин 1249 тĕслĕхне тупса палăртнă, çултаăк маларах ку кăтарту 1160-па кăна танлашнă.

Асăннă тĕслĕхсемпе прокурорсем 15 представлени çырнă, тивĕçлĕ тытăмсене 10 информаци панă. Çак ĕç усси куç кĕрет: прокурорсем «хушша кĕнĕ» хыççăн должноçри 24 çынна /2012 çулта – 15 çынна/ дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

Ведомствăсен хушшинчи «Преступленисен пĕрлехи шутлавĕ» хушăвăн требованийĕсемпе килĕшӳллĕн тивĕçлĕ документсене информаци центрне туллин тата тĕрĕс хатĕрлесе парассишĕн, çавăн пекех статистика ĕçне тĕрĕслесе тăрассине йĕркелессишĕн шалти ĕçсен пайĕсен пуçлăхĕсем яваплă. Апла тăк шăпах вĕсен тата вырăнсенчи прокурорсен лару-тăрăва тĕплĕ тишкерсе çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе мерăсем йышăнмалла. Çакă право хуралĕн органĕсен ĕçĕн пахалăхне тĕрĕс те объективлă хаклама кирлĕ.

**А.БАБАЕВ,**
**ЧР прокуратурин право статистикин пайĕн пуçлăхĕн çумĕ**

## ЖКХ

# Нумай илнĕ, сахал панă

***ЖКХри ĕç-пуçпа нумайăшĕ кăмăлсăрри паллă: пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ тивĕçтермест, вĕсем ытла та хаклă... Шел те, çак кăмăлсăрлăх чылай чухне сăлтавлă.***

Шупашкарти Кадыков урамĕнчи 17-мĕш çуртра пурăнакан ыйтнипе республика прокуратури коммуналлă пулăшу ĕçĕсене шутласа панин саккунлăхне тĕрĕсленĕ. Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – «Новоюжный» ООО 2013 çул кăтартăвĕсем тăрăх хайхи 17-мĕш çуртра пурăнакансен ăшăшăн хывакан тӳлевĕн виçине тӳрлетнĕ. Пĕрлехи шутлав приборĕн кăтартăвĕсен тата çынсенчен илнĕ тӳлев уйрăмлăхне тĕпе хунă. Çапла вара çулталăк тăршшĕпе хваттер хуçисенчен ăшăшăн 835 пин тенке яхăн сахалрах пухнине палăртнă, çителĕксĕррине пуринчен те пухма йышăннă. Йĕркене пăсни çинчен ыйтса çырнă çыннăн 3,7 пин тенкĕ тӳлемелле пулнă.

Çак виçене хайхи тӳрлетӳсĕр пуçне çынсене вĕри шывшăн шутласа паракан тата ресурссемпе тивĕçтерекен организаци управляющи компанирен илекен тарифсен уйрăмлăхне те кĕртсе янă. Çийĕнчен УК 2012 çулта ăшăпа тивĕçтернĕшĕн тӳлеве «тӳрлетессинчен» пăрăнни палăрнă. Ун чухне хайхи хваттер хуçине 3,3 пин тенке яхăнах тавăрса памалла пулнă, чăннипе 338 тенкĕ çеç панă. Пĕтĕмпе вара «Новоюжный» ООО 2012 çулшăн нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакансене 653 пин тенкĕ тавăрса паман.

Çавна май Шупашкарти Калинин районĕн прокуратури «Новоюжный» ООО директорĕ тĕлĕшпе представлени çырнă, уголовлă ĕç пуçарас ыйтăва татса памашкăн тĕрĕслев материалĕсене малтанхи следстви органĕсене ăсатнă.

Сăмах май, асăннă УК тĕлĕшпе çăхав йышлă та – республика прокуратури вăл пăхса тăракан нумай хваттерлĕ мĕн пур çуртра тĕрĕслев ирттерме йышăннă. Унăн кăтартăвĕсемпе вулакана паллаштарма тăрăшăпăр.

**К.НИКОДИМОВ**

## Яваплăх

# Вăрман тăрри тикĕс-и?

***Следстви комитечĕн Патăрьелĕнчи пайĕ Çут çанталăк ресурсĕсен министерствин Шăмăршăри лесничествин вăрман мастерĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ. Ăна ултавшăн айăплаççĕ.***

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн пĕлтĕрхи нарăсра мастер хăйĕнпе пĕр ялта пурăнакан, çурчĕ пушарта çунса кайнă хĕрарăм ячĕпе пайта курма шухăш тытнă. Хĕрарăм инкеке пула вăрман илме пултарнă, лесничество ĕçченĕ вара министр ячĕпе 100 кубометр вăрман пама ыйтса çырнă. Шар курнă çынна хăйне кун пирки пĕлтермен те.

Заявление тивĕçтернĕ, 2013 çулхи çĕртме уйăхĕнче тивĕçлĕ килĕшӳ тунă. Ăна хайхи хĕрарăм вырăнне мастер хăех алă пуснă, укçине те, 10,5 пин тенкĕ, хывнă. Кирлĕ хутсем хатĕр – уйăрнă лаптăкра 99 кубометр вăрман каснă.

Ултав çиеле тухнă. Чее мастер ĕçне район судне ярса панă ĕнтĕ. Сăмах май, вăл кӳнĕ сиене следстви вăхăтĕнчех туллин саплаштарнă.

# Эпир кунта пулăра...

***Шупашкар çынни, 59 çултискер, çав кун пулла кайнă. ГЭС патĕнче пулă тытма юраманнине пĕлнĕ ĕнтĕ, темех мар тенĕ пуль...***

ШĔМĕн транспорт çинчи Чăваш лини пайĕн сотрудникĕсем те шăпах çав кун шыври биоресурссен управлăхне тивĕçтерес тĕллевпе Атăл çине рейда тухнă. Саккунсăр пулăçа, паллах, асăрханă. Ун пирки административлă правăна пăсни çинчен калакан протокол çырма пуçланă. Тытса чарнăскер вара яваплăхран çăлăнма шут тытнă – полицейские хайхи протокола тĕп ту тесе 500 тенкĕ взятка сĕннĕ. Пакунлă çын яваплăх пирки асăрхаттарнă-ха, анчах арçын çав-çавах укçа сĕннĕ.

Лини пайĕн сотрудникĕ взяткăна илмен, должноçри çынна сутăн илме тăнă тĕслĕх тĕлĕшпе уголовлă ĕç çуралнă. Транспорт полицийĕн МИХсемпе çыхăну тытакан инспекторĕ Светлана Егорова пĕлтернĕ тăрăх – ирĕклĕхсĕр хăвармасан та ăнман пулăçăн штраф тӳлеме тивет-тĕр, унăн виçи взяткăн 30 е унтан та пысăкрах виçи чухлĕ те пулма пултарать.

# Пристава — суд умне

***Елчĕк районĕн прокурорĕ федерацин суд приставĕсен службин республикăри управленийĕн Елчĕк районĕнчи пайĕн экс-приставĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ, уголовлă ĕçе район судне тишкерме панă.***

Райцентрта пурăнакан 24 çулти Екатерина Ласточкинăна служба вырăнĕпе усă курса укçана хăйĕн кĕсйине чикнĕшĕн айăплаççĕ. Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн суд приставĕсен вырăнти пайĕнче ĕçленĕскер хăйĕн производствинчи ĕçпе парăмлă çынран квитанцисĕр укçа илнĕ – 61 пин тенкĕ. Анчах çамрăк пристав çав укçана ФСПС управленийĕн депозит шучĕ çине куçарман, хăй тăкакласа пĕтернĕ-мĕн.

**Н.ИЛЬИН**

• ➡ 12 стр.

## Ыйту-хурав

# Ирĕксĕрлеме юрать-и?

**Упăшкана вăл чирлĕ пулнине пăхмасăр /инвалидлăх çук/ колонире ĕçе вырнаçмашкăн заявлени çырма хистеççĕ. РФ Конституцийĕн 37 статйипе килĕшӳллĕн пирĕн çĕр-шывра ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме юрамасть. Çак ыйтăва уçăмлатма ыйтатăп: юсанмалли учреждени администрацийĕн хистевĕ саккунлă-и?**

**С.ЛАПАЕВА.**
Шупашкар районĕ.

– РФ Конституцийĕн 55 статйин 3-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн Конституци стройĕн никĕсĕсене, кăмăл-сипете, ыттисен прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлеме кирлĕ тĕслĕхсенче çын прависемпе ирĕкне чикĕлеме юрать, – пĕлтерчĕ **ЧР юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокурорĕ Александр Зотов.** – Судпа айăпласа ирĕклĕхсĕр хăварнă кашни çыннăн РФ УИКĕн 103 статйипе килĕшӳллĕн юсанмалли учреждени администрацийĕ палăртакан вырăнта тата ĕçре вăй хумалла. Администрацин ристансене вĕсен çулĕсене, сывлăхне, пултарулăхне тата май пуррине кура специальноçне шута илсе обществăшăн усăллă ĕçе явăçтармалла.

60 çултан аслăрах арçынсем, 55-рен иртнĕ хĕрарăмсем, çавăн пекех 1-2 ушкăнсен инвалидĕсем хăйсен ирĕкĕпе ĕçлеççĕ. Çакна палăртмалла: айăпланнисен нумайăшĕн алимент, штраф, преступлени туса сиен кӳнĕшĕн тӳлемелле. Ристана ĕçе явăçтарнă чух унăн кăмăлне обязательнăй йĕркепе шута илмеççĕ.

Конституцин асăннă нормине тĕпе хурса администраци сирĕн упăшкăра ĕçлеме хистени правăпа килĕшсе тăрать. Ятарлă прокуратура çак ыйтăва куçран вĕçертмест. Пĕлтĕр тата кăçал тĕрĕслевсем ирттернĕ май должноçри çынсем айăпланнисене ĕçе явăçтарас енĕпе йĕркене пăснин чылай тĕслĕхне тупса палăртнă, çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăннă.

Меллĕ самантпа усă курса прокурор хаçат урлă пĕлтерме ыйтрĕ: ирĕклĕхсĕр хăварнă çынсене пырса тивекен ыйту пур тăк – «хĕрӳ лини» телефонĕпе /62-56-80/ шăнкăравлăр, сире Александр Павлович Зотов прокурор хăй хуравлĕ.

**Н.ЯКОВЛЕВ**

## Пулни-иртни

# Капитан тав турĕ

Кӳршĕ Хуракассинчи милици капитанĕ Иван Иванович Сĕмĕлти райцентртан таврăннă чухне çула май хăналанма «служебнăй» лавĕпе Гришук куккасем патне час-часах кĕретчĕ. Вăл унти опер пулнă тетчĕç. Кирлĕ çын пулнă ĕнтĕ тир пухавçине – ялан чыслăн хăналанă ăна.

Çил-тăманлă пĕр кун çак хăна яла çитеймерĕ. Ăна Сĕнреш вăрманĕнчен çапă тиесе таврăнакан Илле Вулути курнă. Куккасен умĕнче чарăнсах кайса илме хушрĕ:

– Шăнса вилет, лаши те унтах!

Чуптарчĕ пире, шăкăрккасене, хăй те пĕрлех çемĕçсе юлнă асли. Тустирик ятлă çырма пуçĕнче, чăнах та, хыçлă çуналлă лав тăрать. Хуçи кĕрт çинчех тĕлĕрет, туймасть те сивве! Эпир ăна пĕççи-каççинчен йăтса çуна çине петĕмĕр те чĕлхесĕр янаварĕ Хуракасси еннелле туртăнчĕ.

Çук, ямарăмăр унталла. Уй хапхинчен кĕрсех Гриша куккасен картишне çавăрса тăвартăмăр. Лав çинчине кил хуçи ăшă мунчана çĕклесе кайма хушрĕ...

Ирхине хырăнса çуталнă милиционер шкула Гриша куккапа çитрĕ. Пире, капитана çăлнисене, учительсен пӳлĕмне чĕнсех канфетпа хăналарĕç, чăваш писателĕн Н.Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака», М.Ухсайăн «Кăра çилсем» кĕнекисене те парнеленĕччĕ.

# "Çуллă" касторка

Канăва тухсан милицин саппасри сержанчĕ Иван Памиков тăван Уй Пилемĕч ялĕнче пурăнатчĕ. Эпир, çамрăк милиционерсем, çула май ун патне «опытпа паллашма» кĕркелесех тăнă.

Чăх нумай усраканскер пире кашнинчех çăмарта ăшаласа паратчĕ. Пĕрре пырса кĕтĕмĕр çапла. Çатма тулли çăмарта лартрĕ. Çирĕмĕр. Нумай та вăхăт иртмерĕ – пĕрин хыççăн тепри пахчари «нушнике» чупма пуçларăмăр – тӳсме çук!

– Мĕн çитертĕн эс пире?!

Сĕмĕлти милици ветеранĕ пирĕн нуша сăлтавне самантрах тавçăрчĕ:

– Винават! Каçарăр! Çăмарта ăшаланă чух эпĕ тип çу тесе çатмана хам валли упракан касторкăна силленĕ иккен...

# Читлĕхе çаврăннă нӳхреп

Пĕр кунхине витре йăтса пахча вĕçнелле лăкăштатрăм. Унта – хамах лартса ӳстернĕ йывăççен айĕнче – çумăр хыççăн кăмпа шăкăрин тапса тухать. Курах кайрăм: карта алăкĕ, тăпсинченех тухса ӳкнĕскер, çĕрте выртать. Мĕн амакĕ?

Çывхартăм. Таçтан, çĕр айĕнчен тенĕ пек, тем кăштăртатнă сасă илтĕнет. Пирĕн кунта нӳхреп пур. Усă курмастпăр унпа, чăх-чĕп анса ан кайтăр тесе шăтăка туратсемпе кăна виткеленĕччĕ. Тем тесен те çавăнта...

Хайхи туратсене сиртĕм те – аялта çын пулах кайрĕ. Ырă мар шăршă кӳ! пырса çапрĕ. Çавăнтах, шăтăк тĕпĕнче, тула тухнă пулас. Тухма пулăшмашкăн ыйтать. Хам та уксах-чăлах та – епле вăй çитерес? Пусма илме тесе каялла танкăлтатрăм, çамрăка кĕтме хушса хăвартăм.

Пирĕн тĕлтен кӳршĕ Мишук иртет, ятлаçать:

– Пĕр кăвакала пĕве хĕрринче виççĕмĕш кун пурăнакансем пусса çирĕç пуль – ниçта та çук.

Пусмана йăтса нӳхреп патне Мишукпа пĕрле таврăнтăмăр. «Акă вăл – кăвакал вăрри!» – палласа илчĕ кӳршĕ. Пусмана шăтăка антартăмăр. Кӳршĕ çав-çавах мăкăртатать: «Ни участковăй килсе курăнмасть. Паллашасчĕ унпа – камши вăл?» – «Тĕрĕсех кăмăлсăрланатăн, – килĕшетĕп эпĕ те. – Пĕве хĕррине канма килнисем авă пирĕн пахча алăкне те çĕклесе каясшăн пулнă. Сан кăвакалунтан шашлăк тумашкăн кăвайт чĕртме кирлĕ пулнă-тăр...»

Йĕкĕте шăтăкран кăлартăмăр. Тав тумасăрах пĕве еннелле таптарчĕ.

**Анатолий АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

# Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

**Упăшкипе арăмĕ хăнасене кĕтеççĕ. Кил хуçи çӳлĕк çинчи хаклă йышши кĕнекесене илсе сунтăха чикет – пытарать.**

**– Васук, мĕншĕн пытаратăн? – тĕлĕнет арăмĕ. – Вĕсене хăнасем вăрласран хăратăн-им?**

**– Çук, уншăн мар – хăнасем хăйсен кĕнекисене палласа илесрен шикленетĕп.**

* * *

**Икĕ полицейски хĕç-пăшаллă преступнике арестлес тĕллевпе унăн хваттерне кĕме хатĕрленет.**

**– Эсĕ малтан кĕр, – тет пĕри теприне, – эпĕ вара саншăн тавăрăп.**

* * *

**Кивĕ «Жигули» чаплă «Мерседеса» пырса тăрăннă. ВАЗ салонĕнчен хаваслă арçын тухать, иномаркăри кĕрнеклĕ каччăсене хăйĕн автогражданка полисне кăтартса çапла калать:**

**– Эпĕ çул-йĕр правилисене пăхăнтăм – айăплă мар!**

**– Тĕрĕс турăн, – теççĕ иномарка салонĕнчен тухнă, йывăр чукмарсем тытнă йĕкĕтсем, – халь вара санăн хваттерне пăхма каяр – хаклар...**

* * *

**Улах вырăнта икĕ арçын тĕл пулнă. Пĕри кĕсйинчен çĕçĕ кăларать:**

**– Укçа пур-и?**

**Тепри хĕврен пуртă кăларать:**

**– Сана укçа мĕн тума кирлĕ?**

**Лешĕ çĕççине кĕсйине чикет те унтан 100 тенкĕлĕх укçа кăларать:**

**– Ваклаттарасшăнччĕ...**

* * *

**Судра:**

**– Айăпланакан, суд сире адвокатпа тивĕçтерме пултарать!**

**– Хисеплĕ судья, маншăн адвокат мар, ăна-кăна ăнланакан икĕ свидетель пулсан аванрахчĕ.**

* * *

**Тĕттĕм тăкăрлăкра хурахсем пĕр машинăна чараççĕ:**

**– Вăрланă машинăран тух! – теççĕ водителе.**

**– Мĕн калаçатăр, ку манăн хамăн машина, вăрланăскер мар!**

**– Халĕччен – санăнччĕ, малашне вара – вăрланă машина!**

* * *

**Вăрă пĕр хваттер алăкне уçас тесе аппаланать. Çак самантра кӳршĕсен алăкĕ кăштах уçăлать те унтан пĕр карчăк пуçне кăларса сăмах хушать:**

**– Хаклă ылтăн япалисене вĕсем телевизор çумĕнчи вазăра упраççĕ, укçи вара – аквариум айĕнче...**

* * *

**Банкра пĕр арçын касса умĕнче хăйĕн сумкинче тем шырать, çынсене кĕттерет. Кассир кăмăлсăрланать:**

**– Гражданин, сире пула авă тем тăршшĕ черет! Хăвăртрах татса парăр: эсир укçа хурасшăн-и е илесшĕн-и?**

**– Паллах, илесшĕн! Анчах, мур илесшĕ, пистолета ниепле те тупаймастăп!**

* * *

**– Сирĕн алиби пур-и?**

**– Пур. Валютăпа йышăнатăр-и?**

* * *

**– Пин тенкĕшĕн хупаççĕ-и е 100 миллион тенкĕшĕн – уйрăмлăхĕ çук вĕт! – тет тĕп бухгалтер финанс документне алă пуснă май.**

* * *

**Вăрă сейф патне пырать. Унта çапла çырса хунă: «Тархасшăн, сейфа ан ватăр, унăн алăкне питĕрмен – ахалех уçăлать». Вăрă алăк хăлăпĕнчен туртать. Ун çине тӳрех тем пысăкăш хăйăр миххи йăтăнса анать, сирена кĕрлет, лампочкăсем мĕлтлетме пуçлаççĕ. Преступник полицире тин тăна кĕрет:**

**– Çакăн хыççăн çынсене шан вара...**

* * *

**Киллерсем ресторанта эрех ĕçсе лараççĕ.**

**– Итле-ха, Çеруш, – тет пĕри, – укçашăн эсĕ мана вĕлерме пултарăттăн-и?**

**– Паллах, çук! Эсĕ манăн çывăх юлташ вĕт, саншăн укçа илместĕм...**

* * *

**Çĕрле вăрă ют хваттере чӳречерен йăпшăнса кĕрет. Шкап патне пырать кăна – сасă илтĕнсе каять:**

**– Иисус сана курать!**

**Вăрă йĕри-тавра тинкерет – никам та çук. Каллех шкап патнелле туртăнать. Татах – сасă:**

**– Иисус сана курать!**

**Вăрă хунар кăларса хваттере сăнать. Читлĕхри попугай иккен.**

**– Эсĕ калаçатăн-и? – тĕлĕнет вăрă.**

**– Эпĕ, – хуравлать попугай.**

**– Эсĕ мĕн ятлă вара?**

**– Эпĕ – Иеремия!**

**– Мĕнле тăмсай попугая çакăн пек ят панă?**

**– Мана та, Иисус бульдога та кил хуçи çавăн пек илемлĕ ятсем панă!**

* * *

**Пĕр арçынна сăмакун юхтарнăшăн айăплаççĕ.**

**– Эпĕ юхтарман-çке! Мĕншĕн айăплатăр? – ыйтать вăл судьяран.**

**– Сирĕн килте сăмакун юхтармалли аппарат тупнă вĕт.**

**– Апла тăк хĕрарăма мăшкăлланăшăн та айăплăр!**

**– Эсир кама та пулин мăшкăлланă-им?**

**– Мăшкăлламан, анчах «аппарачĕ» пур-çке.**

* * *

**Икĕ хĕрарăм тĕрмере пĕр камерăра 5 çул пĕрле ларнă. Приговор вăхăчĕ вĕçленнĕ те – тĕрме хапхинчен тухаççĕ, сыв пуллашса тĕрлĕ еннелле утаççĕ. Кăштахран пĕри çаврăнса теприне кăшкăрать:**

**– Тăхта-ха, сана калама маннă...**

* * *

**– Ку укçа ăçтан? – ыйтаççĕ полицейскисем вăрăран.**

**– Тупрăм.**

**– Ăçта?**

**– Ак çак хĕрарăм кĕсйинче.**

* * *

**Террорист метрора пуйăс машинисчĕн кабинине вирхĕнсе кĕрет:**

**– Мана Копенгагена илсе кай, унсăрăн пĕтĕмпех сирпĕтсе яратăп!**

**– Юрĕ! Алăксем хупăнаççĕ! Тепĕр чарăну – Копенгаген!**

* * *

**Ватă çынсем суда пынă – уйрăласшăн. Упăшки – 105 çулта, арăмĕ – 102-ре.**

**– Çакăн чухлĕ пĕрле пурăннă хыççăн мĕншĕн уйрăлас терĕр-ха? – тĕлĕнсе ыйтать судья.**

**– Миçе çул ĕнтĕ пĕр-пĕринпе нушаланса пурăнатпăр, – ăнлантараççĕ лешсем.**

**– Апла тăк мĕншĕн маларах уйрăлмарăр?**

**– Уйрăлма пулатчĕ пуль, анчах эпир ачасене пăшăрхантарас темерĕмĕр, вĕсем çĕре кĕриччен кĕтрĕмĕр.**

# Кроссворд

**К.НИКОЛАЕВ хатĕрленĕ.**



**Сылтăмалла:** 5. Юсанмалли учреждени. 6. Вăл уяр çанталăкрах кĕрлени – чăннипех кĕтменлĕх. 7. Чингиз Айтматов романĕ. 10. Инкек, усал пулăм. 11. Африкăри çĕр-шыв. 12. Çар карапĕсен пысăк ушкăнĕ. 15. Унпа температурăна кăна мар, алкоголь шĕвекĕн хаярлăхне те палăртаççĕ. 17. Пĕр-пĕр объект строительствин хакĕ, пĕтĕмĕшле тăкаксем. 18. Шерлок Холмс тусĕ. 19. Аслă шкул ертӳçи.

**Аялалла:** 1. Хими элеменчĕ, радиоактивлă металлоид. 2. Кама та пулин вĕлерме тара тытнăскер. 3. Пуш хирти хăйăр «кĕрчĕ». 4. Эрех кĕленчине уçмалли хатĕр. 8. Ĕç укçин пĕр пайĕ. 9. Азербайджанри хула, ĕлĕкрех ун ячĕллĕ хĕрлĕ эрех те пурччĕ. 13. Касаматри, тĕрме-колонири çын. 14. Революционер, ун пирки Владимир Ульянов-Ленинăн еркĕнĕ пулнă теççĕ. 15. Хĕлĕхлĕ музыка инструменчĕ. 16. «Мишка-одессит», «У Черного моря» - юрăç.

# Сăмах çерçи мар

«Ĕнер «Жемчужина» ресторанта вăрă-хурахăн икĕ ушкăнĕ хирĕçсе кайнă та – перкелешӳ пулнă. Полици нарячĕ унтан ăнăçлă тарса ӳкнĕ».

*Полици рапортĕнчен.*

«Мĕнле взятка? Ку, симĕсси, укçа мар – открытка! Америка президенчĕн Бенджамин Франклинăн 100 çулхи юбилей ячĕпе кăларнăскер – мана парнелерĕç».

*Допросра каланинчен.*

«Турăçăм, вилĕм ыйтатăп санран! Ан хирĕçлесесем, турăçăм, хам валли ыйтмастăп вĕт!»

*Киллерăн кĕлĕ сăмахĕнчен.*

«Ачасем хăйсен вĕрентекенĕнчен лайăххине нумай илнĕ: телевизор, музыка центрĕ, кĕсье телефонĕ, ылтăн япаласем».

*Участковăй протоколĕнчен.*

«Иванов мана тĕллесе пуртăпа яра пачĕ. Пуртă манăн пуçран лексе ывтăнса кайрĕ те Иванова хăйне уринчен лексе йывăр амантрĕ».

*Айăпланакан ăнлантарнинчен.*




Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ. ● Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» – КРИМ ● Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 56-05-21.

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

*Шăпа*

## 27 çултан амăшне те, ашшĕне те тупнă



**Вĕсен пĕрлехи пĕр сăн ӳкерчĕк те çук: камера е Андрей аллинче, е амăшĕнче, е тата ашшĕнче. Телей патне çак çынсем 27 çул утнă. Уйрăмшарăн. Планета çинче пĕчченшерĕн пурăннă 3 çын каллех пĕрпĕрне тупнă.**

### *Çурта лартнă*

1985 çулхи раштавăн 15-мĕшĕ – çак куна Алла нихăçан та манмĕ. Тата килти çĕр çăтасшĕ кăмакана. Ăна Славик çук чухне хутмалла, вутă çурмалла пулнă. Хĕрарăмăн çие юлнă, çиччĕмĕш уйăх, икĕ хутчен больницăра сипленсе тухнă. Алла пуртă ярса илнĕ, сулса янă та... Ачине вăхăтсăр çуратнă. Виçĕ кун ăнран кайса выртнă. Ăна ачине те кăтартман, кăкăрĕ çумне чăмăртама та ирĕк паман. Славик эрех ĕçсе пынă, хĕрарăм ăна хăваласа янă. Тухтăр арçын ача вилнĕ тесе пĕлтернĕ. Аллăна илсе тухма амăшĕ пынă, Славăпа вĕсем уйрăлнă.

– Ывăлăма кăтартманшăн нумай асаплантăм. Ку вăл йăнăш пулĕ тесе те шухăшларăм, тăвансене канăç памарăм, кӳнтеленсене шырарăм. Каярах чиркĕве кайрăм, ача чунне канлĕх кӳме çурта çутрăм.

Славăпа вĕсем каярах каллех пĕрле пурăнма пуçланă. Тепĕр чухне çĕрлесерен хĕрарăм чунтанах хурланса ларнă: «Ывăлăмăр халь 2 çул тултаратчĕ ĕнтĕ... 3 çул, 4...» «Ан асаплан, тархасшăн!» – хуравланă мăшăрĕ. Славăн ашшĕпе амăшĕ Израиле пурăнма куçнă. Упăшки вĕсене курма кайнă – çакăн хыççăн хăй те ют çĕршыва куçасси пирки калаçу пуçарнă. Документсем пухнă вăхăтра Израильте упăшкин амăшĕ чирлесе ӳкнĕ, ăна инсульт пулнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Нальчикре Аллăн ашшĕпе амăшĕ те аптăранă. Иккĕшĕ те тăванĕсене пăрахайман. Çапла уйрăлнă та...

Хĕрарăм тепĕр хут качча тухнă. Уйрăлнă. Ашшĕ-амăшне, ытти тăванне пытарнă, чирлĕ пиччĕшĕпе иккĕшех юлнă. Пĕчĕк хваттерне унпа пĕрле пайланă.

### *«Аш арманĕ»*

110 çын, ыттисенчен уйăрнă çичĕ ушкăн, «сыввисем пулман унта, аш арманĕ». Андрейăн – церебраллă шалкăм чирĕ, çавна пула ăна ача çуратмалли çуртран тӳрех хысна учреждение панă. Мĕн ас туса юлнă-ха вăл? 7 çулта урисене операци тунине /çапах та вĕсем çав-çавах тӳрĕ пулайман/. Çĕнĕ çул вăхăтĕнчи уявсене; ача çуртĕнчи купăста яшки шăршине; ачасемпе чӳречеренех туха тарса Кабарда тăрăх эрни-эрнипе çӳренине; ушкăнри 24 арçын ачана пăхакан няня куçне хупмасăрах çывăрнине... Ача çурчĕн директорне. Вăл амăшĕн адресĕпе /ача çуратмалли çуртра панă карточкăра сыхланса юлнă/ çыру çырма чарнă. Çак çырусем пĕрин хыççăн тепри каялла килнĕ – каярах çеç ача ку çурта пăснине пĕлнĕ... Часчасах вăл амăшне куç умне кăларса тăратнă: мĕнлерех унăн кăмăлĕ, сасси, çӳçĕ мĕн тĕслĕ... Ашшĕне курасса ĕмĕтленмен те.

Каччă хăй компьютер илесшĕн пулнине лайăх ас тăвать. Техника лавккинче консультантра ĕçлесе туяннă ăна. Ача çуртĕнчи пуçлăхсем унăн хăй тĕллĕн пурăнас ĕмĕтне касса татнă пекех аркатнă /тăлăха хваттер пани вĕсене нимĕнле усă та кӳмен/: «Пĕччен пурăнасшăн-и? Кама кирлĕ эсĕ? Сана тухсанах вĕлереççĕ! Пенси укçине алла памăпăр!» 25 çул тултарсан ăна психоневрологи интернатне куçарнă, «явап тытма пултараймасть» диагноз лартнă.

Ача çуртĕнче ăна Андрей тесе чĕннĕ. Хушамачĕ амăшĕн – Гузев. Вăл хирĕç тăнă. Çынсем ун патнелле туртăннă. Каччă шăв-шав çĕкленĕ, хăйĕн ыйтăвне татса пама вырăнти прессăна явăçтарнă. Тӳрех мар пулин те опекунсен çемйинче пурăнма ирĕк панă. Ирĕке тухсанах «Жди меня» телекăларăма çыру çырнă. Хысна стенисем, чунсăр çынсем – унри ĕненĕве, шанчăка, юратăва нимĕн те тĕп тăвайман. Мускавран тепĕр эрнерен шăнкăравланă: «Эпир ăна тупрăмăр». Нальчикре вĕсем çак çулсенче юнашарах пурăннă темелле...

Çав кунхинех Алла хваттерĕнче те шăнкăрав янăраса кайнă.

– Эпĕ нумай вăхăт ĕненмерĕм. Андрей хăй шăнкăравласан эпир 40 минут нимĕн те калаçаймарămăр, макăртăмăр çеç. «Пыратăп!» – теме çеç пултартăм, анчах та ун чухне каç пулнăччĕ, 10 сехетчĕ. Тепĕр кунхине ывăлăм патне вĕçсе тенĕ пек çитрĕм.

Акă 4 уйăх ĕнтĕ вĕсем пĕрле. Паллашусен сайтĕнче ашшĕн, тирсăран закройщикĕн, анкетине тупнă. Шăнкăравланă. Вăл çав тери телейлĕ. Раштав уйăхĕнче Израильтен Нальчике вĕçсе килнĕ.

– Аэропортрах эпĕ Слава ывăлăм патне кăна мар, ман пата та килнине те ăнлантăм...

Вĕсем документсем пухаççĕ – кăштахран çемье Израиле пурăнма куçать, Слава унта Андрей валли тухтăрсем тупнă.

■ **Полина ИВАНУШКИНА.**

/«Аргументы и факты»/

*Тем те пĕр*

● АПШ президенчĕ Рональд Рейган 1985 çулта Женевăра Михаил Горбачевпа тĕл пулма хатĕрленсе «Москва слезам не верит» фильма 8 хут пăхнă. Вырăс çыннин чун-чĕрине лайăххах ăнланма.

● Венесуэлăри 18 çулти хĕр Венесуэла Мисĕн титулне çĕнсе илесшĕн – çавăнпах сахалрах апат çиес тесе чĕлхи çине пластик пластина çĕленĕ. «Пластина пулăшнипе эпĕ питĕ хăвăрт начарлантăм, – тет Майя Нава. – Эсир ыттисем çиекен апатах çиетĕр, çапах та питĕ сахал, мĕншĕн тесен сетка кансĕрлет».

● Вăтам ĕмĕрсенче Франципе хĕрарăм палачсем пулнă.

●Рязаньте 76 çулти Иосиф Григорьевич Пятунина пурте пĕлеççĕ. Вăл çынсене виçет – ун пекки хулара пĕртен пĕрре. 20 çул тăршшĕнче Григорьичăн медицина виçи çине пурте тăрса курнă. Çакăншăн вăл 3 тенкĕ çеç илет, ку хак нумай çул улшăнман. Анчах та нумаях пулмасть Пятунинăн сăпайлă ĕçĕшĕн чăрмавсем тупăннă: предпринимательсемшĕн Пенси фондне куçармалли тӳлевсем икĕ хут ӳснĕ. Пенсионер Почта урамĕнчи пунктне хупма та хатĕрленнĕ, çапах та Рязаньти ыррине ырăпа тавăрма пĕлекенсем пулăшнă. Вĕсем хăйсемшĕн тăван пекех çывăх пулса тăнă Григорьич бизнесне çăлса хăварма укçа пухасси çинчен пĕлтернĕ.

### 30 çул метро тăвать

Тăван кĕтесне пулăшас тĕллевпе Лебедянь хулинче пурăнакан арçын хăй тĕллĕнех метро тăвать.

Строительство 4 кунра 1 метр хăвăртлăхпа пырать /1 кун – шăтăка чавма, 3 кун – ăна бетонпа витме/. Строитель палăртнă тăрăх – коридорпа 3-4 çын кĕрекен вагонеткăсем çӳремелле, мĕн пур ĕçе автоматизацилемелле. Кирлĕ станцие çитмешкĕн тивĕçлĕ кнопкăна пусмалли çеç юлать. Метро 2 метр тарăнăшĕнче вырнаçнă: унăн стенисене сăрланă, пур çĕре те электричество кĕртнĕ. Лебедянь хулинчи метрополитена çывăх вăхăтра туса пĕтерес çук, çапах та туристсем ăна çав тери килĕштереççĕ.

### Шанчăклă алăра

2011 çулхи пуш уйăхĕнче Японири «Фукусима» атом станцийĕнче авари пулнă хыççăн ку тăрăххран 150 пин çынна эвакуациленĕ. Анчах та пĕр çын кайма килĕшмен. 58 çулти Кейго Сакамото юратнă чĕр чунĕсене пăрахма пултарайман.

Тахçан Кейго атом электростанцийĕнчен 20 çухрăмра чĕр чунсем валли питомник йĕркеленĕ. Халĕ яппунăн 500 ытла чун: йытăсем, кроликсем, качакасем, чăхсем, хурсем. «Çак зонăра эпĕ пĕртен пĕр çын, – тет Сакамото. – Хамăн чĕр чунсене уйăхлăха та пулин пăрахнă тăк вĕсенчен пĕри те сывă юлаймастчĕ».

2 çул каялла инкек пулнă вырăна кĕме чарнă, çапла вара Кейго чĕр чунсемпе çеç тăрса юлнă. Нумайăшĕ вилнĕ. Çапах та халĕ Фукусима тавралăхĕнчи зонăна кăнтăрлахи вăхăтра кĕме-тухма юрать, çавна май Сакамото эрнере икĕ хут çывăхри Иваки хулине апатçимĕç туянма кайса килет.

Вырăнти зоолавккара ыттисене ырă тума тăрăшакан çынсем чĕр чунсем валли апат, кăштах укçа хăвараççĕ. «Радиацирен хăрамастăп, мĕншĕн тесен çĕр-çĕр пурнăçа хӳтĕлетĕп, – тет Кейго. – Эпĕ кунтах юлатăп».

### Священник пулăшать

Дон çинчи Ростовра тĕлĕнмелле священник пурăнать. Андрей Мнацаганов атте хăйĕн икĕ хутлă çуртĕнчен тĕрмере пулнисем валли реабилитаци центрĕ туса хунă. Пуп хăй çемйипе пĕрле пĕчĕкрех çуртра куçнă.

Пачăшкă каланă тăрăх – общество йышăнман çынсене пурăнмалли кĕтес парас шухăш унăн тĕрмере священник пулнă вăхăтра çуралнă. Ирĕке тухнă çынсенчен нумайăшĕ каллех зонăна лекнине курса /мĕншĕн тесен вĕсен ниçта каймалли те çук/ Андрей атте пулăшма шухăшланă.

Маларах судпа айăпланнисем Андрей атте приютĕнче пĕрремĕш е иккĕмĕш хут ĕç укçи иличчен пурăнаççĕ, каярах çурт-йĕр тара илеççĕ. Мĕнлерех статьяпа айăпланни пĕлтерĕшлĕх мар, пурне те йышăнаççĕ. Икĕ условие çеç: эрех ĕçмелле мар тата ĕненекен çын пулмалла. Ирхине тата каçхине кĕлĕсене çӳреççĕ, кăнтăрла ĕç шыраççĕ, священника хуçалăхра пулăшаççĕ.

– Эпĕ хамăн ĕçĕн «çимĕçне» куратăп, – тет Андрей атте. – Паллах, эпĕ пĕччен мар, мана нумайăшĕ пулăшать: ыр кăмăллăх фончĕсем, ахаль çынсем. Çапах та çын хăйне пулăшас тесен çеç ăнăçать.

### Сăлтавĕ ансат

Раççейри чикĕ çывăхĕнчи хуласенче пурăнакан пенсионерсенчен нумайăшĕ Китая пурăнма куçать. Çакăн сăлтавĕ ансат: Китай Халăх Республикинче пурнăç чылай лайăххах – 2 çынран тăракан çемье унта уйăхне 2-3 пин тенкĕпе пурăнма пултарать. Китая куçнă май Раççей пенсионерĕсем хăйсен çĕр-шывĕнчи хваттерĕсене сутаççĕ: кунта çурт-йĕр хакĕ виçĕ хут пĕчĕк.

«Эпĕ Благовещенскри хваттере сутрăм, Китая кайрăм, – тет Хэйхэ хулинче пурăнакан Екатерина Федорова. – Укçа кунта çурт-йĕр, сĕтел-пукан, кирлĕ ытти япала туянма çитрĕ, 1 млн тенкĕ юлчĕ те. Ăна эпир мăшăрпа Китай тăрăх çул çӳресе тăкакларăмăр».

КНРта медицина пулăшăвĕ те йӳнĕ. «Раççейре кун пек хаксемпе çакнашкал тивĕçтермеççĕ, – тет Хуньчунь хулинче пурăнакан Василий Павленко. – Вĕсен больницине пуçласа пырсан тĕлĕнсех кайрăм: çĕнĕ оборудовани, хăвна хисепленине туятăн, черет çук».

Китайпа чикĕллĕ хуласенче чĕлхене пĕлменни чăрмав мар: çынсем юлашки çулсенче вырăсла калаçма вĕренсе çитнĕ. Куçса кайнисем килшĕн тунсăхласан çивĕч ыйту пулмĕ: Раççейĕн Китайпа кӳршĕллĕ хулисенче визăсăр режим вăйра тăрать, кирек хăш вăхăтра та тăван тăрăха хăнана кайса килме пулать.

*Кун-çул*

# Семен Ислюков тата республикăн «кĕмĕл ĕмĕрĕ»



***Семен Матвеевич Ислюков 1915 çулхи нарăс уйăхĕн 7-мĕшĕнче Тутар Республикин Теччĕ районĕнчи Чăваш Таяпи ялĕнче çуралнă.***

Ĕç биографине вăл 1932 çулта Теччĕ районĕнчи Ивановка ялĕнчи пуçламăш шкул заведующийĕпе учителĕнче вăй хунинчен пуçланă. 1939 çулта Хусан юридици институтне пĕтерсен Семен Ислюкова вĕренÿ отличникĕ тесе аспирантурăра хăварнă. Анчах ăна çав çулхи чÿк уйăхĕнчех партин аслă шкулне вĕренме янă. Унта пĕлĕвне тарăнлатнă чухне каччă кандидат диссертацийĕ те çырнă – ăна каярахпа, 1950 çулта, Общество наукисен академийĕнче тавра курăмне анлăлатнă тапхăрта, хÿтĕленĕ, юридици ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăнă.

Семен Матвеевич 1941 çулхи çурла-раштав уйăхĕсенче ВКП/б/ обком лекторĕнче ĕçленĕ, унтан ăна партин Чăваш обкомĕн виççĕмĕш секретарьне суйланă. 1955 çулхи нарăс уйăхĕнче ЧАССР Министрсен Канашĕн Председателĕн должноçне шанса панă. Çав çулхи чÿк уйăхĕнче парти обкомĕн пĕрремĕш секретарьне уйăрса лартнă, унта вăл 1968 çулччен тăрăшнă. Шăпах çав çулсенче С.Ислюковăн вăйлă йĕркелÿçĕ тата лидер пултарулăхĕ уççăн палăрнă. Унăн ĕç-хĕлĕн çак тапхăрне республикăн «кĕмĕл ĕмĕрĕ» теççĕ. Акă мĕншĕн.

Çав çулсенче Чăваш Енре С.М.Ислюков пуçарăвĕпе республикăна талккăшĕпех электрификацилес тата индустриализацилес ĕç пурнăçланнă. Регионра промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсем йĕркеленнĕ, электротехника промышленноçĕн предприятийĕсен ушкăнне туса хунă. Çапла вара Чăваш Ен çĕршывăн аталаннă регионĕсен йышне кĕнĕ тата электротехника промышленноçĕн центрĕсенчен пĕри пулнă. Ял хуçалăхĕнче те пĕлтерĕшлĕ улшăнусем пулса иртнĕ. Культура тытăмĕ пирки те çавнах каламалла. С.Ислюков интеллигенци представителĕсемпе тăтăшах тĕл пулнă. Культурăпа искусствăра çĕр-çĕр çĕнĕ ят çуралнă, вĕсенчен хăшĕ-пĕри тĕнче шайĕнче палăрнă. Семен Матвеевич хăй вăхăтĕнче пулас космонавт Андриян Николаев пирки татăклă сăмах каланă. Вăл тĕнче уçлăхне хăпарсан чăваш халăхĕ пирки пĕтĕм тĕнче пĕлме пуçланă.

Семен Ислюков хăвăрт аталанакан регионта техника çĕнĕ кадрĕсем кирлине аван ăнланнă. Унăн пуçарăвĕпе 1960 çулхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнче Чăваш электротехника ăслăлăх-тĕпчев институчĕ йĕркеленнĕ, каярахпа ăна пĕтĕм çĕршывĕпех ВНИИР пек пĕлме пуçланă. 1961 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче Семен Матвеевич çине тăнипех Мускав энергетика институчĕн Атăлçи филиалне уçнă, унта республика тата çĕр-шыв предприятийĕсем валли специалистсем хатĕрлеме пуçланă. Семен Ислюков тата филиал директорĕ Анатолий Федоров профессор пĕрле килĕштерсе ĕçленĕрен аслă шкулăн пурлăхпа техника çирĕп никĕсне туса хума май килнĕ, нумай хутлă 10 корпус, студентсем валли общежитисем хăпартнă. Филиал электротехника промышленноçĕн предприятийĕсене кадрсемпе тивĕçтерессин çивĕч ыйтăвĕсене кĕске вăхăтрах татса панă: 5 çулта 412 инженер вĕрентсе хатĕрленĕ.

Асăннă филиал никĕсĕ çинче хăй тĕллĕн ĕçлекен техника аслă шкулĕ те йĕркелеме май килнĕ. Анчах, С.М.Ислюков шухăшĕпе, республикăна университет кирлĕ пулнă. Çавна май вăл 1967 çула пĕтĕмпех Чăваш патшалăх университетне уçас ĕçе халалланă, тĕрлĕ йывăрлăха çĕнтернĕ. СССР Аслă вĕренÿ министерстви Чăваш Енре университет уçмашкăн кирлĕ условисем çук тесе шухăшланă. Семен Матвеевичăн çак ыйтупа КПСС Тĕп комитетне кайма тивнĕ. Унти ятарлă уйрăм та республика ертÿлĕхĕн пуçарăвне пит кăмăллăнах йышăнман. Пĕрремĕш секретарĕн КПСС ТК политбюровĕн членĕсене ЧПУ уçни кирлех тесе ĕнентерес тесе çине тăма тивнĕ: вăл хăйне кирлĕ визăсăр нисçта та каймассине пĕлтернĕ. Ку визăна кун вĕçĕнче çеç панă, ăна ыйтупа пĕрле КПСС ТК генеральнăй секретарĕ Л.И.Брежнев патне çитернĕ. Политбюро Чăваш Енре университет уçма ирĕк панă, СССР Правительствине тивĕçлĕ хушусем çитернĕ. Çапла вара Чăваш патшалăх университечĕн идея хавхалантаруçи С.М.Ислюков пулнă. ЧПУ ертÿлĕхĕ «Университет аталанăвне тÿпе хывнăшăн» медале çирĕплетсе тĕрĕс тунă, ку наградăна Семен Матвеевича 2013 çулта /вилнĕ хыççăн/ панă. Хастар çыннăн ЧПУна уçас ĕçри пуçарулăхĕ пирки пурте пĕлмеççĕ, çавăнпа та, пирĕн шухăшпа, çакăн пирки университетра курăнакан вырăнта асăнмалăх çырса хуни пулсан аван.

Семен Ислюков республикăн тĕп хулин аталанăвне те тимлĕн сăнаса тăнă. Вăл хула ĕçтăвкомĕн ĕç стильне тĕпрен улăштарас тĕллевпе Шупашкар хулин пуçлăхне Николай Александрович Рождественские – Омск хула ĕçтăвкомĕн председателĕнче чылай çул тăрăшнăскерне, ăна Çĕпĕрти чи лайăх хуласенчен пĕрне çавăрнăскерне – уйăрса лартнă. Çĕнĕ пуçлăх чи малтанах хулари çурма çĕрнĕ хÿмесене илтернĕ. Шупашкар тÿрĕ та сарлака урамĕсемпе илĕртме пуçланă, чăрăшсем лартнă, çÿллĕ çуртсем хăпарма, троллейбуссем çÿреме тытăннă. Хулан санитари тата экологи тăрăмĕ лайăхланнă.

Семен Матвеевич регионăн социаллă ытти ыйтăвне те татса пама хутшăннă. Çав тапхăрта промышленноç предприятийĕсем çеç мар, социаллă объектсем те çине-çинех хута кайнă: хăтлă хваттерсем, шкулсем, ача-пăча учрежденийĕсем, библиотекăсем, театрсем, инвалидсемпе ваттисем валли интернатсем. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисен, вилнĕ салтаксен çемйисен пурнăмалли тата йăла условийĕсем аваннăнă. Пĕтĕмлетсе каласан – пурнăç пахалăхне лайăхлатас тĕллевпе нумай ĕç тунă. Çивĕч тепĕр ыйтăва та – халăх республикăран урăх çĕре куçса кайни /ĕç вырăнĕсем çукран тата шалу пĕчĕкрен/ – татса пама май килнĕ. Çĕнĕ предприятисем хута кайни, ял хуçалăхĕнчи улшăнусем те пулăшнă ку енĕпе.

Хастарлăхĕпе палăрса тăнăскер СССР арканнăшăн, республика экономики чăхăмлама пуçланăшăн çав тери куляннă. Сывлăхĕ хавшанăран вырăнти условисенчех сипленнĕ. Ăна пулăшас тĕллевпе республика парламенчĕ пурнăç тăршшĕпех патшалăх пособийĕ пама йышăннă. Канмасăр ĕçлени ахаль иртмен: темиçе инсультпа инфаркт чăтса ирттернĕ, 1998 çулхи юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче больницăра вилнĕ.

Ăна çĕр-шывăн чылай орден-медалĕпе наградăланă, ятне Чăваш АССРĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ. Семен Ислюков – Шупашкар хулин Хисеплĕ гражданинĕ. Хулари пĕр урам унăн ячĕпе хисепленет. Вăл пурăннă çурт – Ленинград урамĕнчи 14-мĕш çурт – çине Асăну хăми çирĕплетнĕ. Пирĕн шухăшпа – Чăваш Ен историйĕнчи унăн вырăнĕпе пĕлтерĕшне хăй вăхăтĕнче тивĕçлипе хакласа çитереймен. Чăваш Ен аталанăвне пысăк тÿпе хывнă Семен Ислюковăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки музей уçас тата унăн палăкне лартас ыйтăва сÿтсе явма вăхăт çитрĕ.

**Геннадий МОЖАРОВ,**
**истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ**

*Кире пуканĕ*

# Чăваш Ен команди – пиллĕкмĕш



***Ярославль облаçĕнчи Рыбинскри «Метеор» спорт керменĕнче юниорсен хушшинче çĕр-шывра мала тухассишĕн иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ăмăртура 34 регионти 200 ытла каччăпа хĕр вăй виçрĕç.***

Командăсен тупăшăвĕнче малти пилĕк вырăна Тюмень тата Омск облаçĕсен, Краснодар крайĕн, Пушкăрт тата Чăваш республикисен командисем йышăнчĕç. Пĕрремĕш теçеткере çавăн пекех – Томск, Ярославль облаçĕсен, Мускав хулин, Челябинск тата Вологда облаçĕсен спортсменĕсем. Çапла, çĕр-шыври чи вăйлă çамрăк пăхаттирсем Уралпа Çĕпĕр тăрăхĕнче ытларах пурăнаççĕ.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнче пирĕн ентешсенчен Йĕпреç районĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче вĕреннĕ, халĕ Санкт-Петербургри çар физкультура институчĕн курсанчĕ Марина Федорова савăнтарчĕ. 20 çулти пулас офицер, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕн М.Петровăн вĕренекенĕ 24 килограмлă кире пуканне сулласа 95 хут çĕклерĕ, Тюменьри Динара Халимова хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенткисем Елизавета Еремеевăпа Анастасия Александрова хăйсен виçисенче пиллĕкмĕш кăтартупа палăрчĕç.

Елчĕк районĕнчи Кавал ялĕнче çуралса ÿснĕ Александр Павлов тимĕр вăййипе А.В.Игнатьев ячĕллĕ спорт шкулне çÿреме пуçласан туслашнă. Кире пуканĕ йăтма Сашăна аслă юлташĕ, 2008-2011 çулсенче «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм Раççейри турнирсенче тăтăшах çĕнтернĕ спорт мастерĕ Сергей Соловьев хистенĕ. 2013 çулхи спорт сезонне ял хуçалăх академийĕн студенчĕ Александр Павлов нихăçанхинчен лайăх вĕçлерĕ. 19 çулти каччă çĕр-шыври çамрăксен чемпионатĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнса Раççей спорт мастерĕн нормативне тултарчĕ. Пĕлтĕр раштав уйăхĕн пуçламăшĕнче Кÿкеç поселокĕнче иртнĕ «Хыпар» хаçат турнирĕнче те пулас инженер чи лайăх кăтартупа палăрчĕ. Çавăн хыççăн кире пуканĕ спорчĕн республикări федерацийĕн анлă ларăвĕнче ăна Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командин капитанне суйларĕç.

Рыбинскри чемпионатра Аслă Пăла тăрăхĕнчи чи вăйлă пăхаттир республика чысне 73 килограмлă виçере хÿтĕлерĕ. Унпа пĕрле помост çине 28 атлет тухрĕ. Çивĕч кĕрешÿре чемпион ятне Алтай крайĕн спортсменĕ çĕнсе илчĕ. Александр 32 килограмлă икĕ кире пуканне кăкăр çинчен 100 хут тĕртрĕ, икĕ енлĕ кĕрешÿре 174 очко пухса иккĕмĕш пулчĕ, çу уйăхĕн варринче Санкт-Петербургра иртекен Европа чемпионатне хутшăнма путевкăна тивĕçрĕ.

Пирĕн ентешсенчен Рыбинскра Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕсем Дмитрий Козлов, Иван Кривов, Дмитрий Курчин тата Шупашкарти механикатехнологи техникумĕнче вĕренекен Николай Николаев хăйсен виçисенче пĕрремĕш теçеткери вырăнсене йышăнчĕç.

**Петр СИДОРОВ,**
**ăмăртăвăн аслă судйи**

## Шывра путакансене çăлаççĕ

***Санкт-Петербургра лайфсейвинг енĕпе шывра путакансене çăлакансен Пĕтĕм Раççейри пĕрлешĕвĕн чемпионачĕ вĕçленнĕ.***



Юлашки çулсенче чылай çĕршывра вăй илекен спорт енĕпе тупăшма тĕрлĕ регионтан 300 ытла ишевçĕ пухăннă. Ăмăртăва Чăваш Ен спортсменĕсем те хутшăннă. Пирĕн ентешсенчен унта Раççей спорт мастерĕ Дмитрий Костин ытларах палăрнă. Турнирсенче вăл виçĕ медаль çĕнсе илнĕ: пĕрлештерĕ пулăшу енĕпе – пĕрремĕш, манекена «çăлассипе» тата 200 метрлă дистанцире чăрмавсем урлă ишессипе пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Чемпионат пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Ен команди виççĕмĕш вырăн йышăннă. Шывра путакансене çăлакансен Пĕтĕм Раççейри пĕрлешĕвĕн тĕп канашĕн ертÿçи Петр Налезин пирĕн спортсменсен хатĕрленĕвне пысăк хак панă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Садиксем – çĕнтерÿçĕсен йышĕнче

***Пĕтĕм тĕнчери «Чи лайăх таварсем тата тĕрлĕ ыйтупа тивĕçтересси – Гемма-2013» конкурсра Шупашкарти уйрăм çын тытса тăракан «Пишичитайка» садикпа муниципалитетăн 147-мĕш «Улыбка» ача сачĕ çÿллĕ шайри наградăна тивĕçнĕ.***

2002 çултанпа ирттерекен тупăшăвăн тĕллевĕ – продукци пахалăхне ÿстерсе бизнеса çул парасси, технологисене çĕнетсевăйлатса пырасси. Проекта хутшăннă организаци-предприятисен продукцийĕпе ĕçĕсене /пурĕ 40 пинрен иртет/ эталон шайĕнчисемпе танлаштарса хак панă. Суйласа илмелли тапхăра Раççейĕпе – 805, тĕнчери 57 çĕр-шывран 210 предприяти лекнĕ. Чăваш Республикинчи 14 предприятипе организацин таварĕпе ĕç-хĕлне чи пысăк хак панă.

**И. ИВАНОВА.**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнассĕ.

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, **кольца,** ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**30.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА,** двери стальные, межкомнатные. Низкие цены. Гарантия качества. Звоните. Тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные, **всё для фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**52.Пластиковые ОКНА, железные двери.** Замер. Доставка бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 89276679588.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**79.Прицеп** мотоблока, **мини-трактора.** Т. 89053444735.

**108.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89196535092.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3х4, 3х6, 3х8, 3х10 – в наличии. Доставка по ЧР. **Пенсионерам скидки.** Т. 8/8352/ 36-06-16.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**134.Кирпич, кольца, ФБС блоки.** Д-ка манипулятором. Т. 447353.

**142.ОВС-25** зернопогрузчик, **ЗПС-100** или **меняю.** Т. 89050275457.

**144.Кирпич, керамблок, кольца.** Дёшево. Д-ка. Т. 213680.

**154.Грабли** от 24 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. **Всё новое!** Доставка! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**169.Блоки** керамзитобетонные, **песок, керамзит.** Т. 48-68-95.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**191.Мальков, карпа, толстолобика,** белого амура. Т. 89061313473.

**196.Гравмассу, песок, щебень.** Дёшево. Доставка до 15 тн. Т. 8-902-328-26-67.

**203.Пиломатериал** любой размер: доска шпунтованная, вагонка, имитация бруса; **цемент, гипсокартон,** утеплитель, крепеж. Доставка по звонку. Т. 8-937-953-90-06.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-927-999-37-37.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## УСЛУГИ

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**99.Видеонаблюдение,** автоматические **ворота.** Т. 89278636398.

**127. Автокрана** – 30 м, 25 тн, **экскаватора-погрузчика** "Volvo" BL 71 с гидромолотом. Водопровод и канализация. Т. 8-967-470-32-20.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

## РАБОТА

**97.Требуются рабочие** на монолит. Вахта. Оплата своевременная. Т. 8-917-677-42-98.

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.

## САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"

**УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!**

**Санаторий «НАДЕЖДА» поздравляет Вас**
***С НАСТУПИВШЕЙ ВЕСНОЙ***
**и предлагает весенние СКИДКИ.**
**Только с 31 марта по 30 апреля 2014 года стоимость санаторно-курортной путевки**
**- 10 дней от 15000 руб.**

***К ВАШИМ УСЛУГАМ:***

●высококвалифицированный персонал, ●современное оборудование, ●уникальные методы лечения различных заболеваний, ●сауна 2 раза в неделю, ●ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.

**Справки по телефону: 77-04-04, 77-12-70.**
**Спешите, количество мест ограничено!**

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики

### Извещение о проведении открытого аукциона

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

**Основание:** постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 12.03.2014 г. № 210 "О проведении открытого аукциона на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики".

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

**Контактные лица:** Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 8(83541) 62-2-66

**Характеристика объектов аренды:**

**Лот №1** - земельный участок с кадастровым номером 21:17:140301:271, категории "земли населенных пунктов". Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д.Шептаки, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3400 кв.м.

**Обременения:** земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

**Ограничения использования** земельного участка отсутствуют.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы)** - 1 490 (одна тысяча четыреста девяносто) рублей 00 копеек.

**Сумма задатка** - 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (298 руб. 00 коп.).

**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (74 руб. 50 коп.).

**Срок аренды** - 10 лет.

**Лот №2** - земельный участок с кадастровым номером 21:17:200102:144, категории "земли сельскохозяйственного назначения". Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:200102, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1131287 кв.м.

**Обременения:** земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

**Ограничения использования** земельного участка отсутствуют.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы)** - 82 245 (восемьдесят две тысячи двести сорок пять) рублей 00 копеек.

**Сумма задатка** - 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (16449 руб. 00 коп.).

**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (4112 руб. 25 коп.).

**Срок аренды** - 10 лет.

**Лот №3** - земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1624, категории "земли сельскохозяйственного назначения". Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 182397 кв.м.

**Обременения:** земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

**Ограничения использования** земельного участка отсутствуют.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы)** - 14 683 (четырнадцать тысяч шестьсот восемьдесят три) рубля 00 копеек.

**Сумма задатка** - 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (2936 руб. 60 коп.).

**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (734 руб. 15 коп.).

**Срок аренды** - 10 лет.

**Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:**

**1.** Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

**2.** Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа - финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112389501 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО "Сбербанк России", кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

**3.** Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе - **с 31 марта 2014 года по 29 апреля 2014 года.**

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с.Моргауши, ул.Мира, дом 6, каб. № 312.

Дата, время и порядок осмотра земельного участка на местности: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

**Требования к участникам аукциона:**

В аукционе на право заключения договоров аренды земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, и определение участников аукциона состоится на заседании Комиссии - **30 апреля 2014 года в 15.00** часов по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды земельного участка. Договор аренды земельного участка заключается в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола.

Время проведения открытого аукциона **01 мая 2014 года** (по московскому времени): Лот №1 - 10.00, Лот №2 - 10.20, Лот №3 - 10.40.

## РАБОТА

**202.Срочно требуются штукатуры.** Большие объемы. Оплата сдельная. Т. 8-919-670-07-00.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.

Патăрьел район администрацийĕ Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн профессорĕ, ветеринари наукисен докторĕ
**Александр Васильевич ШИЛОВ**
сарăмсăр вилнĕ пирки хурланни çинчен пĕлтерет.

*Уяв*

# Культура ĕçченĕсене чысларĕç



*Пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче тĕп хулари П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕнче Культура ĕçченĕн кунне халалланă уяв иртрĕ.*

Мероприятие Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов уçрĕ. Салам сăмахĕнче вăл тăван тăрăхăн культура еткерлĕхне ÿстерсе, аталантарса пынин, упраса хăварнин пĕлтерĕшĕ пысăккине палăртрĕ, ăрусен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме, нумай енлĕ культура усăхне йĕркелеме патшалăх пысăк тÿпе хывнине каларĕ. Унтан кулленхи ĕçре пысăк çитĕнÿ тунисене Тав çырăвĕсемпе тата компьютер техникипе чысларĕ. Хула пуçлăхĕ хавхалантарнисен шутĕнче – П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕн директорĕ И.Гаврилова, Шупашкарти Акцыновсен ячĕллĕ ача-пăча ÿнер шкулĕн директорĕ В.Аксенов, ачасен вулавăшĕсен централизациленĕ тытăмĕн директорĕ Е.Бондарев.

«Культура аслă тата çамрăк ăру çыннисен туслăхне çирĕплетме, обществăна аталантарма, пысăк тĕллевсем лартма пулăшать», – терĕ ЧР культура министрĕн çумĕ Иван Иванов. Тăван республикăн культура аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн, нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн, çитĕнÿсемпе палăрнăшăн культура тытăмĕн ĕçченĕсене Хисеп хучĕсемпе чысларĕ.



Шупашкар хула депутачĕсен пухăвĕн социаллă аталану тата экологи комиссийĕн председателĕ Ирина Клементьева культура ĕçченĕсем çыннăн тавра курăмне йĕркелес, кăмăл-сипет никĕсне хывас енĕпе пунăçлакан ĕç-хĕлĕ пирки каласа кăтартрĕ.

Уявра пултарулăх ушкăнĕсемпе артистсем пухăннисене юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

*Мĕншĕн çапла калатпăр*

# Кĕреçе сухал – арçын илемĕ

«Ну, Çитăр пичче, санăн çĕнĕ хăту çине пăхса тăранмалла мар: çÿллĕскер, тулли – платнаскер, йăрăскер. Сухалĕ тата мĕне тăрать: кĕреçе пек, ял старости тейĕн çав», – тет кÿрши /Çитăр пичче нумаях пулмасть хĕрне ют яла качча панă иккен те – хăти ак хăнана килнĕ/.

Тулли те кĕрнеклĕ, çирĕп, патвар кĕлеткеллĕ, кĕреçе сухаллă çулланма пуçланă çынна авалах çапла хак панă. Акă халăх пуçтарăннă та ялта староста суйлама тĕв тытнă. Староста пулас шухăшлă çын сахал мар-мĕн, анчах пĕри те юрăхлă мар. Авалах, ваттисем калана тăрăх, яла кантуртисем килсен тÿре-шара умĕнче çÿллĕ те кĕрнеклĕ, кĕреçе сухаллă арçын тăмалла пулнă, пĕрре пăхсанах куç умне сумлă çын тухса тăтăр, халăха хăйне итлеттерме пĕлтĕр, сичĕ ютрисене ÿкĕте кĕртсе ял çыннисен интересĕсене хÿтĕлеме пултартăр.

Халăх пухура сăнать: кĕреçе сухаллисем çукпа пĕрех, пĕри пĕвĕпе ытла лутра та пĕчĕкскер, пăхмалăх та çук; тепри вăрăм та тăсланкăскер; виççĕмĕшĕ пуян пулин те имшер, сухалĕ тата шĕвĕркке пулнăран качака сухалне аса илтерсе кулăшла курăнать. Сайра пулин те ялта кĕреçе сухаллисем те курăнкаланă. Акă илер-ха хамăрăн асран тухми патриарха Иван Яковлевах. Çапла вара сухал хăш-пĕр арçынна илем кÿрет, сумлă кăтартать.

■ **Роман ЧЕПУНОВ**

# Поэта аса илчĕç

*Нумай сăвă-юрă авторĕ, Элĕк районĕнчи Лутра Пакăш ялĕнче çуралса ÿснĕ Аркадий Лукин /1934-1995/ поэт пурăннă пулсан çак уйăхра 80 çул тултармаллаччĕ. Шел, "Коммунизм ялавĕ" хаçатра, «Тăван Атăл» тата «Ялав» журналсенче ĕçленĕскерĕн кун-çулĕ 61-рех сÿннĕ.*

Çак кунсенче Элĕк район администрацийĕн культура пайĕ пуçарнипе ентешĕн юбилейне анлăн паллă турĕç. Поэтăн пултарулăхĕпе культура çурчĕн директорĕ Любовь Андреева паллаштарчĕ. Сăвăçа Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ Владимир Иванов, Денис Гордеевпа Валерий Прокопьев тата Геннадий Савельев писательсем те ăшшăн аса илчĕç. Районти ветерансен хорĕ Аркадий Лукинпа ытти поэт сăввисемпе хывнă чăваш композиторĕсен юррисене шăрантарчĕç, çамрăк артистсем чăвашла тутар, украин ташшисемпе савăнтарчĕç.

■ **Г.САВЕЛЬЕВ**

# Гороскоп

*Пуш, 31 - ака, 6*

**Сурăх.** Пултарулăхăра, ăсталăхăра туллин кăтартмалли тапхăр. Пушăн 31-мĕшĕ – савăнăçлă кун: шалу ÿстерессине пĕлтерĕç, кăсăклă хыпар илтетĕр. Вырсарни кун вара юлташăрсене хăнана чĕнетĕр пулин те ытлашши ан тăкакланăр. Çывăх çыннăрсем сирĕнпе чуна уçса калаçасшăн – вăхăт тупăр.

**Вăкăр.** Шел те, пурнăçри улшăнусем пăшăрхантарĕç: çăвара шыв сыпмасан вăрттăнлăхăрсем пирки çывăх çыннăрсем кăна мар, ĕçтешĕрсем те пĕлĕç. Унсăр пуçне шухăшламан-туман çĕртенех тăкакланма тивĕ /ытлари кун/. Эрне кун – ăнăçсăр кун: юратнă çыннăра кĕвĕçмелли сăлтав тупăнĕ.

**Йĕкĕреш.** Пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса памашкăн ан васкăр. Эрнен иккĕмĕш çуррине вĕсем çăмăлланах уçăмланĕç. Сывлăхăр пирки те ан манăр: терапевт патне кĕрсе тухăр, стоматологпа канашлăр... Руль умĕнче ларакансене çăлтăрсем асăрханулăрах пулма хистеççĕ.

**Рак.** Ĕçлĕ командировкăна кайса килни карьера картлашкипе хăпарма пулăшĕ. Çапах сирĕн çул çинче чăрмавсем пулĕç. Вĕсене хыпаланмасăр парăнтарма тăрăшăр. Эрнен иккĕмĕш çуррине вăхăта çемьепе пĕрле ирттерĕр: тăванăрсем патне хăнана кайса килĕр, урамра уçăлса çÿрĕр...

**Арăслан.** Çемье бизнесĕпе аппаланакансем çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ тăвĕç. Шăмат кун ĕçлĕ тĕл пулăва хутшăнăр – унта тупăш кÿрекен килĕшĕве алă пусма май килĕ. Анчах вырсарни кун тимлĕ пулăр – хут ĕçĕсемпе тăрмашнă чухне йăнăшас хăрушлăх пур.

**Хĕр.** Чылай ĕçтешĕр сирĕн шухăшпа килĕшмесен те проекта ăнăçлă вĕçлеме, ун хыççăнах тепĕр ĕçе кÿлĕнме май килĕ. Калаçма ан ÿркенĕр, ăсталăхăра туллин кăтартăр – çапла хистеççĕ çăлтăрсем. Ĕç нумай пулнăран вырсарни кун та килте лараймастăр, анчах вăйран кайиччен тăрмашни хăрушлăх кăларса тăратма пултарать: чирлесрен сыхланăр.

**Тараса.** Тĕлĕнмелле ăнăçлă эрне! Асăр-аннĕр, тусăрсем пулăшсан ĕçре те ÿсĕм тăваятăр. Çак тапхăрта çĕнĕ ĕçе кÿлĕнме шут тытнисен те пăшăрханма кирлĕ мар: алла пысăк тупăш кĕрĕ. Шăмат кун вăхăта чи çывăх çыннăрсемпе ирттерме, вĕсен кăмăлне çĕклеме тăрăшăр.

**Скорпион.** Зодиакăн ку паллин тапхăрĕнче çут тĕнчене килнисем кил-тĕрĕшре аппаланĕç: чечексем куçарса лартĕç, çуртра тирпей-илем кĕртĕç. Ытлари кунпа кĕçнерни кун асăр-аннĕрпе, пуçлăхăрпа ан тавлашăр, эрне кун çывăх çыннăрсене кĕрекене пухăр. Тĕл пулăва йыхравласан та ан кайăр – унта нимĕнле çĕнĕлĕх те пулмĕ.

**Ухăçă.** Пачах та ĕçлес килмест-и? Пур пĕрех ан кахалланăр, шанса панă мĕн пур тивĕçе тĕплĕн пурнăçлăр. Вăй-хăват тапса тăмасть-и? Пĕр-пĕр секцие çырăнăр, спортпа туслашни кăмăлăра çĕклĕ. Юлташăр пулăшу ыйтать-и? Ан хирĕçлĕр, вăл халĕ чăнах та йывăр тапхăра тÿссе ирттерет.

**Ту качаки.** Усламçăсемшĕн лайăх тапхăр. Куçман пурлăх туянас шухăш пур-и? Ытлари кун ĕçри партнерсемпе курса калаçăр, командировкăна кайма палăртăр. Йывăрлăхра шанчăклă юлташăрсем алă параççех – ан иккĕленĕр. Эрне кунпа шăмат кун документсемпе аппаланăр, вырсарни кун çывăх çыннăрсемпе юнашар пулăр.

**Шыв тăкан.** Ку яхăнта пуç çĕклемесĕр ĕçлемелле пулĕ: çĕнĕ проекта пурнăçлама тытăнатăр, юлташăрсене пулăшатăр... Укça-тенкĕпе, документсемпе, транспортпа çыхăннă йывăрлăхсем сиксе тухма пултарĕç. Çитменнине, чир-чĕр нушалантарĕ.

**Пулăсем.** Пысăк укça ĕçлесе илес тесех тăçта та ĕлкĕрме тăрăшатăр. Анчах çăлтăрсем кирек мĕнпе аппаланас умĕн те тĕплĕ шухăшлама, пысăк должноçра вăй хуракан тăванăрсемпе канашлама сĕнеççĕ. Канмалли кунсенче кăмăлăра çĕклеме май тупăр.



## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 29.03 | - 2 | - 6 |
| 30.03 | + 3 | - 4 |
| 31.03 | 0 | - 5 |
| 01.04 | + 1 | - 6 |
| 02.04 | + 2 | - 5 |
| 03.04 | + 3 | 0 |
| 04.04 | + 6 | - 2 |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95–Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8220. Заказ 1113.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.